47-37

ХВЕТĔР УЯР

# СУК хĕрринче

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
1947

3928

ХВЕТĔР УЯР

13 июня 1947 г.
№ 44

# СУК ХĔРРИНЧЕ

*Калавсем*

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1947

## ТУПМАЛЛИ


Сук хĕрринче . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Тăвансем кĕтеççĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
Ç ы р у . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 32
Экзитус леталис . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 36



Редактор Л. Я. Агаков

НТ 00821. Подп. к печ. 4/V-47 г. Заказ № 1449. Тир. 3000. Объем 2,5 п/л.
г. Чебоксары, тип. № 3 Управления Полиграфпромышленности
при Совете Министров Чувашской АССР

## СУК ХЁРРИНЧЕ

(*Юлташ калавӗ*)

Эпир пӗр лупашкара канса выртатпӑр. Шӑп кӑнтӑр тӗлӗ. Йӗри-тавра куҫа шартса, вӗҫӗ-хӗррисӗр чечек уйӗ саралса выртать, инҫетре вӑрмансем курӑнаҫҫӗ, шыв йӑлтӑртатать. Ку тур пилленӗ кӗтесре ҫӗр ҫула яхӑн ӗлӗкрех чаплӑ сунарҫӑ Иван Сергеевич Тургенев ҫӳренӗ. Ӑшра, таҫти сӑваплӑ вырӑна пырса кӗнӗ чухнехи пек, темӗн чӗтренсе илет, пурнӑҫшӑн, тӗнчери пур ырлӑх-хурлӑхсемшӗн такама тав-тӑвас шухӑш пырса кӗрет. Тен ку вӑл вӑхӑтлӑха чун хӑпартланни кӑна пулӗ, анчах ҫапах та фронтри шиклӗ пурнӑҫ маншӑн ҫак самантра паха та интереслӗ пек туйӑнать. Фронтра ҫын пурнӑҫа хаклама вӗренет. Кунта чи таса ӗҫсемпе шухӑшсем аса килеҫҫӗ, чи хӑватлӑ ӗмӗтсем ҫуралса ҫитӗнеҫҫӗ. Ман шухӑшпа, Улӑп ҫинчен калакан юмахсене те кӑмака ҫинче ларакан айван мар, хӑрушлӑха кулленех куҫран пӑхакан паттӑрсем хывнӑ. Хӑюллӑ ҫын пуҫӗнче шухӑшӗ те хӑюллӑ, айванӑн—шухӑшӗ те айван.

Эпӗ хампа юнашар выртакан Ильин ҫине пӑхатӑп. Вӑл та, ман пекех, вӑрҫӑччен студент пулнӑ, кӗнекесене юратнӑ, чаплӑ ӗмӗтсемпе пурӑннӑ.

Ильинӑн кӑшт тӑрхаларах хитре пичӗ, пысӑк хура куҫӗсем, пӗтӗм кӗлетки—вӑл тулли кӑмӑлпа канса выртнине кӑтартаҫҫӗ.

Сывлӑшра шӑна-пӑвансем явӑнаҫҫӗ; чечексем ҫумне куҫҫӑр пек пыра-пыра ҫапӑнса, пӗччен пыл хурчӗ вӗҫсе ҫӳрет. Сӑмса умӗнчех хӑмӑрлана пуҫланӑ шултра ҫырласем усӑнса тӑраҫҫӗ.

Ильин хӑех калаҫма пуҫлать.

— Эх, ку ҫырлана пӗрер чӗрес татса пельмень пӗҫерес пулсан...

Сӑмахӗсене вӑл, пулма пултарас ҫук япала ҫинчен калаҫнӑ пек, тӑсса та шӑппӑнтараххӑн каласа хурать.

— Вӑрҫӑ иртсен пӗҫерсе ҫийӗпӗр,—тетӗп эпӗ.—Вӑрҫӑ

чарăнсанах эсĕ Шупашкара пыр. Атăл хĕрне тухса хуран çакса ярăпăр та...

— Вăрçă иртсен ăна такам та пĕçерме пултарать. Эсĕ халĕ пĕçер вăт, кунта, фронтра...

— Пĕçер-ха вăт, çийĕпĕр.

— Эпĕ-и?

Ильин сасартăк тăрса ларать.

— Пĕçерейместь, тетĕн-и? Курса тăр!... Ей бог та... Атту тупнă пĕр юрă: вăрçă иртсен те вăрçă иртсен, теççĕ. Хăнăхнă та кашни ĕçех çавăн пек сĕвĕртсе хăварма. Йăваш характерлĕ çынсем çапла хăтланаççĕ ăна. Чăнах. Хăйсен кахаллăхне пула пур япалана та ырана хăварса пыраççĕ. А ыранĕсен—вĕçĕ те çук. Пăхăсăн—çыннăн алли-урисем чĕтрекен пулнă, çӳçĕ шурса кайнă, курпунĕ—хăпарту пысăккĕш. „Çук ĕнтĕ, манран пулмарĕ. Ачасем çинче шанчăк, эп тăвайманнине çавсем туса пĕтерччĕр“. Çук, эсĕ хăвах ту!—кулса ярса сасартăк мана хулпуççирен çапрĕ Ильин.—Ачасем—хăйсемшĕн пурăнаççĕ, саншăн мар.

— Кашни самантрах пурăнма пĕлес пулать,—тет Ильин, кăшт чĕнмесĕр выртнă хыççăн.—Неччу унта ырана хăварса пыма. Чăнах.—Унтан вăл, хăйĕн сăмахĕсене шӳтле çавăрса яма хăтланса, кулса илет те автоматне çавăрса тытать.—А пельмень пулатех. Курса тăр... Ĕненместне?

Ĕненмесĕр! Ильин каларĕ-тĕк—пулатех вара. Хăйне кирлĕ япаласене çĕр айĕнчен чавса кăларать те—тупать вăл.

Эпĕ месерле çаврăнса выртса тӳпенелле пăхма тытăнатăп. Аван çанталăк! Кăн-кăвак тӳпере кăтра пĕлĕт таткисем шăваççĕ. Сывлăшра эрешмен карти ука тĕслĕ кукăрăнса йăлтăртатать. Пĕр те пĕр шухăшласан, кунта нимĕнле вăрçă та, нимĕнле хăрушлăх та çук, темелле ĕнтĕ. Çав тери мирлĕ те чуна лăплантаракан сăн-сăпат. Тӳпе те, чечексем те, эрешмен карти те—пурте эпир ĕлĕкрех уйра чавсасене тавăрса тыр вырнă чухнехи пекех. Анчах инçех те мар пулемет кĕскен таклатса илет, автомат шатлатать, аякра-аякра, такам йывăç çурт ишсе антарнă пек, бомбăсем ӳксе çурăлаççĕ.

Эпир нумаях пулмасть разведкăран таврăнтăмăр. Манăн юлташ, Куйбышев облаçĕнчи чăваш ачи Ильин, автоматне тасатать. Кĕçех ак вăл ăçтан та пулсан шыв тупса килсе чей çакса ярать, çырла татма пуçлать...

— „Кашни самантрах пурăнма пĕлес пулать“, тетĕн эсĕ. Мĕнле, ӳкĕнмелли вăхăтсем пулман-и санăн хăвăн? Усă курма пĕлнĕ-и эсĕ кашни минутпа?

Ильин автоматне хурать те пӗр вӑхӑта мана куҫран пӑхса ларать, унтан унӑн пысӑк хура куҫӗсем таҫта аяккалла тинкерсе пӑхма тытӑнаҫҫӗ.

— Темӗн,—тет те вӑл курӑк ҫине хутланса ларать.— Ӗҫре, вӗренӳре кайран ӳкӗнмелле ан пултӑр, тесе тӑрӑшаттӑмчӗ ӗнтӗ эпӗ. Совӗҫе яланах таса тытма тӑрӑшаттӑм. Кӑна эпӗ мухтанса мар, хамӑн шухӑшсене кӑна каласа паратӑп. Аякран пӑхсан, тен, ку енӗпе те шӑйрӑксем пулкаланӑ-тӑр... Вӑл мар-ха, мана леш... Мӗнле калаҫҫӗ-ха ҫав... личнӑй пурнӑҫри пӗр... ҫитмен ӗмӗт канӑҫ памасть.

Ильин темшӗн вӑтаннӑ пек пулса аллипе ҫӳҫне сӑтӑркаласа илет, эп ыйту парасса кӗтсе ман еннелле пӑхать.

— Личнӑй пурнӑҫ тени вӑл... мӗнле калас, питӗ те кӑткӑс япала иккен,—тесе малалла калама тытӑнать вӑл пӑртакран.—Хӑшпӗр чух санӑн хуйху-суйхусем пӗтӗм тӗнчене хупласа илнӗ пек туйӑнаҫҫӗ, ҫутҫанталӑка курми пулатӑн. А тепри сан ҫумӑнтах апат та ҫиет, пуҫӗ те—тӑп-тӑр урах. Тен, ман калавӑм та сана ҫавӑн пек туйӑнӗ. Тен, вӑл маншӑн кӑна интереслӗ пуль. Ҫапах та итле, каласа парам сана кӗскен...

I

1941-мӗш ҫулхи ҫуркунне пире, институтри студентсене, практикӑна салатрӗҫ. Манӑн пӗр пӗчӗк хулана киймалла пулчӗ. Лав тытрӑм та ҫула тухрӑм. Ҫанталӑк чиперех тӑратчӗ-ха. Ҫу умӗнхи кӑмӑла ҫӗклентерекен кун мӗн кӑнтӑрла иртиччӗнех ҫӗр тӗрлӗн ҫиҫсе, йӑлкӑшса тӑчӗ. Ялсене пырса кӗрсен, хӑлхара ҫуртсем ҫинчен шӑпӑртатса тумла юхни, ача-пӑчасем савӑнӑҫлӑн ҫуйӑхашни илтӗнсе тӑрать. Ҫу ӑшшине туйса, йыт-качӑкасем те ӗрӗхтерсе кӑна ҫӳреҫҫӗ, вӗрес килмен ҫӗртенех пирӗн лава сырса илсе уй хапхинчен тухиччченех харкашса ӑсатса яраҫҫӗ.

Каҫпала кӗтмен-туман ҫӗртенех пӗлӗт хупласа илчӗ, ҫерҫи пуҫӗ пек лапкам-лапкам йӗпе юр ҫӑва пуҫларӗ, пӗтӗм юр пӗлӗчӗ ҫӗре таталса анчӗ, тейӗн. Халиччен чиперех калаҫса пынӑ лавҫӑ-старик сасартӑках чӑхӑмлама пуҫларӗ.

— Мӗнле шутлатӑн, ыр ҫыннӑм,—тет,—ман лаша ҫак самантрах ӗшенсе ӳкӗ-ши, е кӑштах каярахпа-ши?—тет.

Лаши хӑйӗн хуҫи пекех чее йышши пулас: яка ӳтлӗ пулсан та, вӑл майӗпен те сӳрӗккӗн пускаласа пырать, тӑтӑшах пирӗн ҫине ҫаврӑна-ҫаврӑна пӑхать.

— Ҫак самантра та, кӑшт каярахпа та ӗшенес ҫук-ха

вăл санăн,—тетĕп эпĕ.—Вăл лашапа И. хулине мар, Мускава та пĕр шикленмесĕрех кайса килме пулать.

Пăртак чĕнмесĕр пынă хыççăн лавçă каллех сăмах хушма хăтланса пăхрĕ.

— Карчăк та пĕрре мар ятланă мана уншăн... Çемçе кăмăллă пулнăшăн, тетĕп-ха та... Ара, кам ухмахĕ кайтăр çак çанталăкра вунă тенкĕшĕн хĕрĕх çухрăма?..

Студент кĕсъи мĕнли паллă ĕнтĕ вăл, çавăнпа лавăçа хирĕç эпĕ ырă та, усал та шарламарăм. Старик телейне, инкекĕ те лаша ури айĕнчех пулнă иккен. Кĕçех пĕр яла пырса кĕтĕмĕр. Ялтан тухасси ик-виç килĕ çеç юлнăччĕ, пире хирĕç пĕрене тиенĕ лавсем килни курăнчĕ. Лавсене çул парас тесе, старик лашине сылтăмалла тытрĕ. Ачасем çунашкасемпе ярăнса пăрлантарнă çырма хĕррипе пыракан çуна хăяккăн-хăяккăн шурĕ те çырманалла кая пачĕ. Вăл хай сулăмĕпе лашана та туртса антарчĕ. Такансăр лаша пăр çине персе анчĕ. Шартлатса турта хуçăлса кайрĕ.

— Çитрĕ çимĕк... Çав пушă çунана та туртса кăларайман пулать те...—вăрçса тăкрĕ лашине çырма тĕпĕнче мĕшĕлтетекен лавçă.

— Хамăр та çав. Ав, сулахаялла кăна пăрмалла пулнă, çырмана курах сылтăмалла тытрăн вĕт...—терĕм эпĕ, пулнă инкеке лавçă çине йăвантарса.

— Вара... Инкек куçа курăнса килмест, теççĕ çав,—çиййĕнчех каласа татрĕ лавçă.

Лашана хăвăрт тăварса, çунине çырмаран сĕтĕрсе кăлартăмăр.

— Эккей, çитесси нумай юлманччĕ...

— Турта тупас пулать ĕнтĕ...

— Тепле-çке?..

— Ялĕ вăрман çывăхĕнче-ха. Ялта çерçи вилмен, теççĕ... Ав çав çурта кĕрсе пăхам-ха,—тесе элĕ хăйă çутти курăнакан кил енчелле утрăм. Кивелнĕ вырăсла хапхан калинккине тĕксе пăхрăм. Питĕрмен. Çенĕкĕ те уçах.

Хуллен пӳрт алăкне шаккатăп.

— Килте-и хуçисем?

— Кам унта?—илтĕнчĕ пӳртрен хĕрарăм сасси.

— Эпĕ-ха... Çул çӳрекен..

— Кĕрĕр...—терĕ пӳртри сасă.

Тирпейлĕ пĕчĕк пӳрт. Сĕтел çинче йĕс сăмавар чашкăрса ларать, ĕçме çимесене те пуçтарман.

— Сывă-и?

— Сывах-ха.. Тĕпелелле иртĕр.

Ман умра, кăшт вăтаннă пек, çав хушăрах ырă кăмăл суннă пек, пĕве çитнĕ хитре хĕр тăрать. Эпĕ пĕрре хĕр çине, тепре урасем çине пăхса илтĕм те, хам та хĕрелсе карăм.

— Каçарăр, лайăх шакканса кĕреймерĕм...

Хĕр эпĕ вăтаннине сисрĕ пулас, кулянçи пулчĕ.

— Инçетрен килетĕр-и? Çанталăкĕ ытла пăсăлса карĕ...

— Чарăнать пулас-ха та...

— Тепелелле иртĕр.

— Çук, иртсе тăмастăп: ман тулта лавçă пур.

— Лавçă?.. Ара, ма чĕнместĕр ăна, чĕнĕр, пӳрте кĕрсе ăшăнтăр.

— Пирĕн васкамалла-ха... Пĕчĕк инкек пулчĕ пирĕнпе. Турта хуçăлчĕ.

— Инкекĕ пĕчĕккех те мар иккен,—каллех кулса илчĕ хĕр.—Турта кирлĕ апла сире? Туртине тупăпăр...

— Тавтапуç; тупсан тем пекехчĕ.

— Эй, часрах тата эсир!—илтĕнчĕ тултан лавçă сасси.

— Халех,—терĕ хĕр, сасартăк хыпăнса ӳксе,—тумланам-ха. Сарайĕнче туртасем пурччĕ пирĕн...

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, хуçăк турта вырăнне çĕннине лартрăмăр.

— Ăçталла çул тытатăр? Инçе каймалла пулсан, пирĕн патра çĕр каçăр...—терĕ хĕр, кăштах ĕнтĕркенĕ сасăпа.

— Инçи-качки...Çак юлташа хулана леçсе хăвармалла-ха ман,—терĕ лавçă.—Студенцă вăл... Лаша ĕшенчĕ. Уринчен урине те аран иртерет... Юлташ сирĕн пата юлма килĕшсен, питех те аванччĕ. Эпĕ вара тӳрех киле кайăттăм, инçетрисем мар эпĕ кунтан.

— Юлăр эппин, юлташ,—çаврăнса тăчĕ хĕр ман еннелле.—Ыран ирпе ăсатăп сире.

— Юрĕ эппин, килĕшетĕп, спасибо.

— Турташăн та спасибо,—терĕ лавçă, çуни çинчи улăмне кăпăшлантарса,—пасар кунĕ çула май кĕртсе парăп... Ну, сыва пулса юлăр.

— Сыва пулăр. Ан чăрманăр: туртасем татах та нумай. Чипер çитĕр.

Лавçă лаша ĕшеннĕ тенине мансах кайрĕ пулас, пирĕнпе ал тытса сывпуллашрĕ те, çуни çине кĕрсе ларса, лашине туртса çапрĕ. Лешĕ пĕр самантрах куçран çухалчĕ...

Хĕр кулса ячĕ.

— Эсир самаях йывăр пулас. Куртăр-и, мĕнле кайрĕ лаша сирĕнсĕр?

Эпĕ, чемодана йатса, хĕрпе пĕрле пўрте кĕтĕм.

— Кўрĕр чемоданăра, ав лере кайса лартам,—терĕ те хĕр, манран чемодана илсе, тĕпелти сак айне кайса лартрĕ.—Салтăнăр та тĕпелелле иртсе ларăр.

Эпĕ каллех пўртре хыпаланса çўрекен хĕр çине пăхса илтĕм. Чăн та чипер иккен вăл. Çинçе пилĕклĕ те яштака пў-силлĕскер, вăл çămăллăн та илемлĕн хускалса çўресе чей чашкисене майлаштарать, пысăк хура куçĕсемпе ман çине кулкаласа пăхса илет.

„Хитре хĕр,—шухăшласа илтĕм эпĕ,—кăмăллă...“

Мана çав самантра темшĕн Пушкинăн „Станционный смотритель“ повеçĕнчи ĕçсем аса килчĕç, темле аван мар пек туйăнса кайрĕ.

Эпĕ салтăнсан, хĕр мана сĕтел хушшине ларма сĕнчĕ.

— Чей ĕçме ларăр, юлташ. Ăшăнăр, ларăр, ларăр...

— Тавтапуç. Аласене çăвасчĕ те малтан...

-- Килĕр, ал çумалли кунта...

Эпĕ çăвăнтăм та, хĕр арчинчен кăларса панă алшăллипе шăлăнса, сĕтел хушшине кĕрсе лартăм.

— Çиййĕр, ĕçĕр,—сĕнме пуçларĕ мана хĕр.—Акă пыл, йўçĕтнĕ панулми...

— Спасибо. Манăн чемоданра шаритленĕ хур пурччĕ... Кăларам-ха çавна.

— Ан чăрманăр, ыран ирпе çиййĕр ăна... Халь сивĕ вăл.

— Юрĕ эппин, сирĕн пек пултăр... Сирĕн ыттисем ăçта тата?...

— Анне кўрше тухса кайрĕ-ха.

— Ялтах пурнатăр-и?

— Мар, хулара ĕçлетĕп. Шкулта...

— Каçарăр та, мĕнле чĕнмеллечĕ-ха сире?

— Нюра... Сире тата?

— Ильин... Федор Ильин.

— Ăçта кайма тухнă вара эсир... Федор Ильич?

— Практикăна каятăп. Институтран...

Пĕр вăхăта пĕрне-пĕри нимех те чĕнеймерĕмĕр. Эпĕ çисе тăрантăм та, спасибо ыр кăмăларпа апатăршăн, текелесе, сĕтел хушшинчен тухрăм.

— Çимеллеччĕ-ха, чей ĕçмеллеччĕ. Апачĕ те нимех те çук та...

— Пурте çитет. Тăраничченех ĕçрĕм те, çирĕм те.

Каллех сӑмах татӑлчӗ. Хӗр пуҫне чикнӗ те вӑрӑм ҫивӗт вӗҫӗнчи хӑюне сӳткелесе куҫ хӳрипе ман еннелле пӑхать.

— Иккӗн ҫеҫ пурнатпӑр тетӗр-и?—сӑмахсем айванла янтранине сисетӗр-качах калаҫӑва хускатма хӑтланса пӑхрӑм эпӗ.

— Мар...—майӗпен те тытӑнчӑклӑн, ҫав вӑхӑтрах именерехххӗн каласа хучӗ Нюра. — Пичче те пур... Хулара ӗҫлет... Учитель.

Эпӗ Нюра хулара ӑҫта ӗҫленине ыйтса пӗлесшӗнччӗ, ӑна та ыйтаймарӑм, ӗшеннипе часах сыв ӑрса кайрӑм.

Ирхине эпӗ вӑраннӑ ҫӗре чылай вӑхӑт ҫитнӗччӗ. Пӗркеленчӗк питлӗ пӗчӗк карчӑк мана куркапа ӑшӑ сӗт ӑсса кӗрсе пачӗ, сӗтел ҫине ывӑспа икерчӗ кӑларса лартрӗ. Нюра пӳртре ҫукчӗ. Эпӗ васканипе вӑл ӑҫта кайнине те ыйтса тӑраймарӑм, ҫикелерӗм те, чемодана йӑтса, хуланалла тухса утрӑм.

* * *

Ҫуран утса ҫӳресси маншӑн темрен те паха. Ҫӳлте—кӑвак тӳпе. Йӗри-тавра вӗҫсӗр уй, юрпа хупланнӑ вӑрмансем, ҫырма-ҫатра. Аякра пӗр вӑхӑта вӗҫен кайӑк ҫунатти е куян мӗлки вӗлтлетсе илет. Утатӑн, утатӑн... Тӑвӑр пӳлӗмсенче, тӗркӗшӳре пурӑннӑ хыҫҫӑн уйра ҫав тери ҫӑмӑл та ирӗк пек туйӑнать. Чун уҫӑлса каять. Ал-урасем, хул-ҫурӑм, пӗтӗм ӳт-пӳ канать, ҫутҫанталӑк ырлӑхӗпе савӑнать.

Хӑшпӗр чух ҫавнашкал самантсем пулаҫҫӗ: мӗн ӗмӗтленетӗн, мӗн шухӑшлатӑн—ҫавӑ пӗр чӑрмавсӑрах пурнӑҫа кӗрессӗн туйӑнать. Ман пурнӑҫри ӗмӗт—хамӑр вӑйпа колхозра чаплӑ электростанци туса лартасси. Ик-виҫӗ ҫул хушши ӗнтӗ эпӗ унӑн кашни пайне куҫ умӗнче курса тӑратӑп, ураписем мӗнле ҫавӑннине илтетӗп. Тӑван ҫӗршыв пулӑшнипе ура ҫине ҫӗкленнӗскер, эпӗ хама ҫак самантра чи телейлӗ ҫын, тесе шутлатӑп. Пӗрре те ӗненес килмест... Ик-виҫӗ кун каялла ҫеҫ эпӗ вӗренсе ларattӑм. Нумаях та пулмасть... ҫарран шкула чупаттӑм. Халӗ ак—хам вӗрентме пуҫлатӑп.

Чӑн та, телей тени вӑл кам уншӑн тӑрӑшать, кам ӑна шырать—ҫавӑншӑн ҫеҫ иккен.

Ура айӗнче ҫемҫе юр нӑтӑртатса пырать. Ӑшӑ ҫил вӗрет. Эпӗ аякра курӑнакан тӗтӗмсене, кӑвак тӳпене, кайӑксене сӑнаса пыратӑп, вӗсем мӗнле тӗслине, ӑҫталла вӗҫнине куратӑп, анчах пуҫра, пуҫра та мар-ха, темӗнле вӑрттӑн кӗтесре, шухӑшсен айӗнче—пӗрмаях ӗнерхи хӗрӗн сӑн-сӑ-

пачӗ сӗмленсе пырать. Тепӗр чух шухӑшсем пачах та урӑх еннелле куҫса каяҫҫӗ. Эпӗ хам каякан шкула, унти ачасене, учительсене куратӑп. Шкулӗ вӑл темшӗн уллах урамра, ҫырма хӗрринче пулассӑн туйӑнать. Картишӗнче сад. Улмуҫҫисем, чие йывӑҫҫисем айӗе хыҫлӑ тенкелсем лартнӑ. Икӗ хутлӑ чул ҫуртра ачасем савӑнаҫлӑн кӑшкӑрашаҫҫӗ...

Ӑшра темӗнле кансӗр шухӑш сисӗнтернӗҫем сисӗнтерме тытӑнать, вӗчӗрхенме пуҫлать. Таҫти вӑрттӑн хӗлӗх, вӗҫӗмсӗр чӗтренсе тӑрса, юлашкинчен пӗтӗм шухӑша хупласа хурать. Сасартӑк астуса илетӗп: Нюра!..

— Эх, юлташӑм, — тесе Ильин мана сасартӑк ыталаса илчӗ, — эс вӑл хӗре курас пулсан... Пуҫ антраса каять вӗт. Ун пек хӗр хама юратнине пӗлес пулсан, эпӗ ҫӗр чӑмӑрне тепӗр майлӑ ҫавӑрса лартма хатӗр...

— Ытла тата эсӗ... Вара мӗн пулчӗ? Ҫапла пӗччен хӑпартланнипех пӗтсе ларчӗ-и юрату теви?

— Тӑхта эсӗ... Хула патнелле ҫывхарса пывӑҫем чӗре тата хытӑрах пӑшӑрханма пуҫларӗ. Аптранӑ енне каялла ҫаврӑнма та шутласа пӑхрӑм. Анчах килте мар-ҫке вӑл... Юрӗ, терӗм вара эпӗ хама-хам, хулара эп ӑна шыраса тупатӑпах, унта ҫук пулсан, каялла таврӑннӑ чух, хӑйсем патне кӗрсе тухатӑп.

Шкулӗ вуҫех те эп кӗтнӗ пек пулмарӗ. Хула леш хӗрринче, айлӑмра ларать вӑл. Йӗри-тавра сад та чӗртсе ӗлкӗрейменха. Ҫапах та ҫулла илемлӗ пулмалла ку вырӑн. Йнҫех те мар вӑрман куранать. Сук шывӗ юхса иртет. Шкул ҫурчӗ пысӑк та ҫӗнӗ. Аялти хутра мана ачасем директор кабинетне кӑтартса ячӗҫ.

Алӑкне уҫрӑм та, сасартӑках ура вӑйӗ пӗтнӗ пек пулчипе, пӗр пукан ҫине тӗрентӗм. Сӗтел хушшинче... Нюра лара парать. Эпӗ ӑна кӗтмен ҫӗртен тӗл пулнипе сывлӑх сунма та, алӑка хупма та манса кайнӑ. Коридорта ачасем шавланине илтсен тин тӑрса хупрӑм та сӗтел патне пырса тӑтӑм. Пит-куҫ хамӑн чӗкӗнтӗр тӗслех пулмалла, вӗри ҫаплине те сиссех тӑратӑп.

— Директора курма пулать-ши?

Нюра хӑвӑрттӑн ман ҫине пӑхса илчӗ те темшӗн хӑй те хӗрелсе кайрӗ; каллех хут ҫине пӗшкӗнчӗ, пуҫне ҫӗклемесӗрех пукан ҫине тӗллесе кӑтартрӗ.

— Чиперех ҫитрӗр пулӗ? Ларӑр, ларӑр... Директор урокраччӗ-ха. — Унтан вӑл пуҫне хут ҫинчен илчӗ те уҫҫӑн

та сарăнăçлăн кулса ярса аллине пачĕ:—Каллех турта пир-и мар пуль те эсир?

Сăмах майĕпе каласа хунă шўт, ăшă кулă, эп вăтаннине асăрхаман пек туни—пĕр самантра кăмăла хăпартрĕ. Эпĕ Нюрăн вĕри аллине чăмăртарăм та хута сĕтел çине кăларса хутăм.

— Çук, хальхинче урăх сăлтавпа çўретĕп. Кăштах сирĕнпе пĕрле ĕçлесе пăхма шухăш пур.

— Пирĕнпе пĕрлех мар пуль-ха та... Эпĕ пуçламĕш классенче кăна ĕçлетĕп вĕт.

— А вăл çавах мар-и-мĕн? Ман шутпа унта ĕçлесси тата та кансĕртерех.

— Пĕрле килме вăратасшăнччĕ те эп сире, тивмерĕм. Питĕ хитре çывраттăрччĕ.

— Вăратнă пулсан, хăвăрах кансĕр пулнă пулĕччĕ. Эпĕ хытă утма юрататăп.

— Мĕнлеччĕ унта, утса пăхнă пулсан. Тен эпĕ те юлсах каймăттăм.

Нюра паян майĕ тавра кăшăл пек тăракан шур çухаллă хура кĕпе, çўхе пальто тăхăннă. Хура çўçне кăпăшлантарса сулахай еннелле тураса хунă. Вăл пĕр вунсакăр-вунтăхăр çулсенче пур пулсан та, темшĕн питĕ çамрăк пек курăнать.

Нюра мана кунта ĕçлеме яни çинчен калакан хута вуласа пăхрĕ те, кăштах тĕлĕннĕ пек пулчĕ.

— Математикăпа физика? Хм... Эп сире темшĕн литератор е историк пулĕ, тесе шутланăччĕ.

— Мĕншĕн?

— Хам та пĕлместĕп мĕншĕнне. Сирĕн сăн темле... Математика учителлĕнни пек мар.

— Мĕнлерех-ши апла?

— Мĕнле калас сире... Эсир гуманитарнăй наукăсене вĕрентекен çын евĕрлĕ курăнатăр.

— Вĕсен хăйсене евĕр сăн-и мĕн? Беликов та гуманитарнăй наукăна вĕрентнĕ. Йăнăшмастăп пулсан, вăл чĕлхеçĕ пулнă.

Нюра кулса ячĕ те—тăчĕ.

—Парăнатăп, каçарăр тархасшăн... Эп темĕскер пăтраштарса кайрăм никак-ха.

Эпĕ те кулнă пек турăм.

—Пырать... Нимех те мар... Сирĕн піччĕр те çак шкулта ĕçлет терĕр-и?

—Çакăнта ĕçлет.

Кĕçех шкул директорĕ пычĕ те мана хваттере ертсе кайрĕ.

II.

Сисмесӗрех пӗр уйӑх иртрӗ. Хулари садсем шап-шур чечеке ларчӗҫ. Сук шывӗ хӗрринче иртен пуҫласа каҫченех хурсем какалаҫҫӗ, ача-пӑчасем ҫуйӑхашаҫҫӗ. Хула тавра-шӗнчи ҫерем симӗс курӑкпа тата хур тӗкӗпе хупланчӗ.

Ӗҫсене пула эпӗ ку хушӑра никампах та паллашса ӗл-кӗреймерӗм. Кӑнтӑрла кунӗпех шкулта иртет, каҫпа уче-никсен тетрачӗсене юсаса ларап, тепӗр кун валли конс-пектсем туса хатӗрлеп. Ҫӗрле... ӑҫта кайӑн, тепӗр тесен, ҫӗрле ют хулара? Ик-виҫӗ хут шкул директорӗ Сергей Кузьмич патӗнче пултӑм, анчах унпа пирӗн сӑмахсем пиҫ-сех каймарӗҫ. Сергей Кузьмич, кӑшт шатрарах питлӗ лут-ра ҫын, темшӗн мана ҫуралнӑранпах директорта пурӑннӑ пек курӑнать. Учениксемпе калаҫнӑ пек, яланах вӗрентсе калаҫать вӑл, яланах ӑслӑ сӑмахсем калать.

Малтанах калама пулать: Сергей Кузьмич вӑхӑтра выр-тать те вӑхӑтра тӑрать, нихҫан та йӑнӑшмасть, йӑнӑшма та пултараймасть. Анчах уссине те унран ытлашшинех ан кӗт: унашкал ҫынсем пур ӗҫре те „золотая середина"текен правилӑна пӑхӑнса пурӑнаҫҫӗ.

Пӗрремӗш хут пырсан, Сергей Кузьмичӑн сентенцийӗсем мана ҫӗнӗ пек туйӑнчӗҫ, иккӗмӗш хутӗнче эпӗ хам студент иккенне астуса илтӗм, виҫҫӗмӗшӗнче—йӑлӑхтарса ҫитерчӗҫ.

Ытти учительсенчен Нюра пиччӗшӗпе, Иван Петровичпа, ҫывӑхрах туслашрӑмӑр. Иван Петровича учительсем кӑшт кулӑшларах ҫын, хиртяк, кӗнекеҫӗ тесе шутлаҫҫӗ иккен. Ҫав вӑхӑтрах камӑн та пулин ыйтса пӗлмелли пулсан, е тавлашу тухса кайсан, ыйтӑва татса пама тӳрех ҫавӑнтан ый-таҫҫӗ. Иван Петрович хаҫат-журналсене те ҫыркалать иккен.

Эпӗ ӑна малтанах Кавказ ҫынни пулӗ тенӗччӗ. Кӗске туналлӑ та йӗпкӗн хура ҫӳҫлӗскер, курпун сӑмсаллӑскер, вӑл учительсен пӳлӗмне пырса кӗрсенех кӗнекине хучӗ те ман ҫумма пырса ларчӗ.

— Die Stunde ist zu Ende*), —терӗ вӑл, куҫлӑхӗ витӗр ман урасем ҫине тинкерсе.—Wie spät ist es?**). Манӑн каҫчен яла ҫитес пулать-ха...

Учительсем кулса ячӗҫ.

— Was?—текелесе Иван Петрович кӗнекине ҫавӑрса тытрӗ.—Аннене курманни чылай пулать-ха. Паян йӑмӑк кай-

---

*) Урок пӗтрӗ.

**) Миҫемӗш сехет?

са килчӗ те, шутсӑрах кӗтет тет... Утас пулӗ...

Эп ҫаплах чӗнменнине кура Иван Петрович пуҫне ҫӗклерӗ те тӗлӗннипе куҫлӑхне хывса илчӗ.

Эпир иксӗмӗр те ура ҫине сиксе тӑтӑмӑр.

— Каҫарӑр тархасшӑн,—терӗ те вӑл аллине тӑсрӗ.—Эп сире нимӗҫ чӗлхине вӗрентекен Федор Касьянович пулӗ тесе. Паллашар: чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекен Иван Петров. Эсир?...

Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах тупӑнчӗ. Калаҫса кайрӑмӑр. Эпӗ ӑна ӗнер хӑйсем патӗнче хӑнара пулни ҫинчен пӗлтертӗм.

Иван Петровичӑн куҫӗсем сасартӑках ҫуталса кайрӗҫ.

— Ну, мӗнле?—терӗ те вӑл чавсипе чӗркуҫҫи ҫине тӗренчӗ, ман ҫине ҫав тери юратнӑ ҫын ҫине пӑхнӑ пек пӑхма пуҫларӗ.—Хӑналаса ячӗ-и сире анне? Пӗҫерсе ҫитерчӗ-и пӗлӗмсем, икерчӗсем...

— Икерчине эп тӑрӑчченех пӗҫерсе хунӑччӗ,—терӗм эпӗ.—Ӑшӑ сӗт те суса ӗҫтерчӗ.

Иван Петрович савӑнӑҫлӑн сиксе тӑчӗ те ман алла тытса чӑмӑртарӗ.

— Тавтапуҫ ыр сӑмахӑршӑн, юлташӑм! Вӑл ылттӑнран та хаклӑ пирӗншӗн.

— Мӗншӗн хӑвӑр пата илсе килместӗр эсир ӑна?

— Килмест вӗт. Ним тусан та колхозран хӑпса тухасшӑн мар. Ӗҫ чӗре патне пынӑ чух колхозрах ӗҫлетӗп, сана пӑхма Ануш пур вӗт унта, тет. А эп пӗчӗк ача-и-мӗн—мана пӑхма?—текелесе Иван Петрович ман умма пырса тӑчӗ.—Тавтапуҫ турра, ҫирӗм тӑххӑра пусрӑм ӗнтӗ... Ну, сыв пулса юлӑр. Ҫитес вырсарникун сире кӗтсех тӑратӑп ӗнтӗ эпӗ... Сирӗнпе темле калаҫма питӗ ҫамӑл.

Вӑл пукан ҫине пырса кӗрсе, кавир ҫинче такӑнкаласа, канцелярийинчен тухса кайрӗ.

Тепӗр икӗ эрнерен, вырсарникун, эп ирех тӑрса тумлантӑм та Сук шывӗ хӗррипе, тавра ҫулпа, Нюрӑсен хваттерӗ еннелле тухса утрӑм. Манӑн кӑштах ҫурхи кунпа савӑнса уҫӑлса ҫӳрес килетчӗ.

Хитре те тӳлек ҫӳрхи ҫанталӑк Сук тӑрӑхӗнче. Улӑхри ҫӗмӗрт, ҫирӗк, хӑва йывӑҫҫисем хушшипе таҫтан-таҫтан шыв сарӑлса выртать. Аякри утравсем ҫинче, чӗрӗ сывлӑшра, кайӑк кӑвакалӗсем нартлатаҫҫӗ. Такам ачашланӑ пек, ӑшӑ ҫил вӑштӑртатса юхса иртет, шӑппӑн-шӑппӑн тӗлӗрекен шыв кӑкрине кӑтралатса хӑварать. Шыва усӑннӑ хӑва тураттисем хускалса илеҫҫӗ, чӗрлӗх шывӗпе чӳхенсе кун пуҫланасса кӗтме тытӑнаҫҫӗ. Туран тӗтре йӑсӑрланса килет, пӗтӗм улӑха,

шыва, йывӑҫсене хупласа хурать. Ак ӗнтӗ ҫил те чарӑнчӗ, кайӑк-кӗшӗксем те шӑпланчӗҫ, шыв та хускалмасть. Анчах пур ҫӗрте те, пур япалара та: шывра, йывӑҫсенче, сывлӑшра,—темӗскере чӑтӑмсӑррӑн кӗтни, ӗнни, йыхӑрни сисӗнсе тӑрать. Ҫурхи асамлӑ тӗнче ҫутӑлас умӗнхи ҫамӑл та канӑҫсӑр ыйӑхпа ҫывӑрать.

Кӗҫех инҫетри тӗттӗмлӗхре, улӑхсем леш енчи чӑваш ялӗсенче, пӗрремӗш автан авӑтса ярать. Унтан иккӗмӗшӗ хутшӑнать, виҫҫӗмӗшӗ...

Мӑнтарӑн сӑваплӑ ирхи ҫанталӑкӗ, пирӗн ачалӑхӑн ачаш сӑпки!

Кам юратмасть пуль ӗнтӗ автан сассиллӗ те шӗлтӗрти пӑрлӑ ҫурхи ире. Пуринчен ытла ҫуркунне ялта лайӑх. Тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах йӑмрасем тӑрринче кураксем кӑшкӑрашма тытанаҫҫӗ. Ялкӑр уҫӑ тӳпене кашни пӳрт тӗлӗнчен тӗтӗм юпи ҫӗкленет. Алӑк шалтлатнисем, лаша кӗҫенни, пуҫа тараси чӗриклетни, витре-ҫарма шӑнкӑртатнисем илтӗнме пуҫлаҫҫӗ. Итӗртӳллӗн кулкаласа, сан умӑнтанах сарӑ хӗр чупса иртет. Таҫта чӳрече васкаса уҫӑлать.

—Эй, Анюк, кӗр-ха наччаслӑха, пӗр курка сӑра ӗҫтерем.

Кӗҫех картасенче сӗт чӑрлатма тытӑнать, сывлӑша ӑша сӗт шӑрши сарӑлать...

Ак ӗнтӗ ӗнесене те суса пӗтернӗ, чӑх-чӗпсене та сара тулӑ сапса панӑ. Кахаллӑн кавлекен ӗне ҫурӑмӗ ҫине чавка пырса ларать, йӗри-тавра куҫне-пуҫне вылятса, унӑн йӑптӑхне тӑпӑлтарма тытӑнать.

Ӗне тулли кӑмӑлпа сывласа куҫне хупать..

Ан кул, юлташӑм, эпӗ ун чух пурӗ те ҫирӗмре ҫеҫ пулнӑ, пӗрремӗш хут юратнӑ. Пулас тӗлпулу, савӑнӑҫлӑн уҫӑлакан ҫурхи ир, кӑвак тӳпере юрлакан кайӑксем,—пӗтӗм ҫак сасартӑк йӑтӑнса аннӑ ҫамрӑклӑх телейӗ чӑн та ман пуҫа антратрӗ, чӗрене хускатрӗ. Элӗ Халиччен ҫӗр хут та курнӑ пӳртсем, садсем, йывӑҫсем ҫине халь тин ҫуралнӑ ҫын пек савӑнса пӑхатӑп. Манӑн вӗсене кашнинех тытса ачашлас килет, чӗре патӗнчи ӑшӑ та йӑпатуллӑ сӑмахсене калас килет.

И. хулимана пур енчен те яла аса илтеретчӗ. Пӗчӗкренех пуҫа кӗрсе юлнӑ ял сӑн-сӑпачӗ пекех, вӑл пӗр эрне хушшинче ман тӑван кил пулса тӑчӗ. Эпӗ халь ҫуртсемпе садсем ҫине те, тислӗклӗ ҫул ҫинче чинлӑ утса ҫӳрекен курак ҫине те тахҫан ӗлӗк курнӑ япаласем ҫине пӑхнӑ пек пӑхатӑп. Чӑн та, ал-урасенче вӗри юн тапса тӑнӑ чух, йӗри-тавра сан пекех сывлӑхлӑ та хаваслӑ ҫынсем, хитре

тумланнă çамрăксем çÿренĕ чух кашни куна ĕмĕре тăсас килет.

Нюрăпа Иван Петрович пурăнакан пĕчĕк пÿрт те мана темшĕн тахçан курнă çурта аса илтерчĕ. Унашкал çуртсене час-часах хула хĕррисенче курма пулать. Çиелтен пăхма вĕсем мĕскĕн те сăпайлă. Тен ытларах та сăпайлă пуль. Тăррине витнĕ хăми хуралса ларнă. Вĕрлĕк хапха. Урам енчи ик чÿрече хушшинче черчен туналлă лăстăрти хурăн ларать. Сасартăк куçа илĕртмелли, кăмăла хай патнелле туртмалли нимех те çук ĕнтĕ кунта, çавăнпа çула тухнă çынсем вĕсене чылай чухне асăрхамаççĕ те. Анчах кăшт аяккарах кайса сăнарах пăхăр-ха эсир вăл çуртсем çине. Сирĕн куç умĕнчех вĕсем хитреленсе, темĕнле шалти илемпе капăрланса кайнă пек туйăнма пуçлаççĕ. Вĕсенче пытаранчăк вăй, вăй та мар-ха, темĕнле вăрттăн тивĕçлĕх, сулмаклăх пурри сисĕнме пуçлать. Вара эсе малтан курăнвă мĕскĕнлĕх, çиелти сăр, суя мираж кăна пулнине ăнланса илетĕн. Ирĕксĕрех йĕри-тавра çавранса пăхатăн: мĕн-ши вăл çак сулмаклăха кÿрсе таракан хăват? Пÿрт умĕнчен хĕвелтухăçнелле сарăлса выртакан ирĕк уйсем-ши? Е картиш хыçĕнчи улмуççи сачĕ-ши?..

Эп пырса кĕнĕ вăхăтра Нюра кăмака умĕнче апат-çимĕçсем хатĕрлетчĕ. Çине вăл çутă-кĕрен кофтă, хура юбка тăхăннă. Уринче—çÿлĕ кĕлеллĕ туфли. Çÿçне çав-çавах кĕлте пек кăпăшлантарса сулахай енвелле тураса хунă.

Çинçе те илемлĕскер, вăл кăмака умĕнче хĕрелнипе халĕ тата та хитререх пек туйăнать.

Пÿрт ăшчикки питĕ тирпейлĕ. Икĕ кровать: пĕри алăкпа картишне тухакан чÿрече хушшинче, тепри—малти кĕтесре. (Вырăнне мĕнле пуçтарни тарăх пăхсан, ку—хĕрарăм кровачĕ.) Икĕ сĕтел, тăват-пилĕк пукан, вĕсем те пулин килте тутарнăскерсем. Стенасем çинче çулпуççен сăн-ÿкерчĕкĕсемпе пысăк куçкĕски тата кĕнеке çÿлĕкĕсем пулман пулсан, пÿрт ăшчикки тен ытла та пушăрах пек курăннă пулĕччĕ-и.

Сĕтел хушшинче çырса ларакан Иван Петрович мана курсанах сиксе тăчĕ те, хирĕç утса пырса, алла чăмăртарĕ.

— Тухмасть, —терĕ вăл салхуллăн.—Пилĕк сехетренпе асапланса ларатăп, темиçе вариант та туса пăхрăм ĕнтĕ, пĕри те килĕшмест...

Иван Петрович пăртак мыскараллăрах çын, хиртяк, „оригинал" тенине илтнĕ пулин те, эпĕ малтанах аптраса ÿкрĕм.

— Кам тухмасть? Мĕн килĕшмест?

— Юрă тухмасть, — терĕ те Иван Петрович, куçлăх витĕр йăмăкĕ çине пăхса илчĕ.—Ĕлĕкхи юрăсене куçарассипе аппаланса ларатăп та, нимĕскер те тухмасть. Иртнĕ расра анне авалхи юрăсем юрласа пачĕ. Хăшпĕрисене эпĕ унччен те илткеленĕ. Анчах анне юрланине илтсен, тĕлĕнсех карăм... Мĕн тери илем-те мĕн тери хурлăх вăл юрăсенче! Уй варринчи тăлăх-турат пекех туйнă иккен хăйне ĕлĕк чухне мăнтарăн чăвашĕ. Ниçта та ни ăшă кĕтес, ни хӳтлех, ни шанчăк курăнмасть.

Хура вăрман çинчи хура пĕлĕт,
Тата мĕн çăвасси, ай, пур-ши ун?
Ай-хай, асапăмсем, кĕске ĕмĕр,
Тата мĕн курассисем, ай, пур-ши-ха?

Хапхăр умăрсенче, ай, лăс хурăн
Çĕре тиви-тивми, ай, ларасçке.
Ай-хай-ах та мăнтарăн, ай, телейĕ,
Çынна çити-çитми, ай, тăрасçке.

Тата „уй варринчи лаштра юман" текен юрра астăватăр-и? Вăт çав юррăн пĕтĕм сĕтекне, пĕтĕм тĕпсĕр хурлăхне куçарниччe палăртма вăй çитерес пулсан, эпĕ хама шутсăрах телейлĕ çын тенĕ пулăттăм. Пĕр „лаштра" тене сăмах кăна мĕне тăрать... Да-а... Çынсем мухтаççĕ, анчах хама килĕшмеççĕ-çке? Редакцинче те ырланă вăн. „Пичетлетпĕр, татах куçарса ярăр", теççĕ...

Пиччĕшĕ калаçнă вăхăтра Нюра сĕтел çине пырса чавсаланчĕ те пĕрмаях ун çине пăхса ларчĕ. Унăн пурçăн пек çемçе çӳçĕ ман пите сĕртĕнсе кăтăклантарса тăрать. Эпĕ çывăхранах Нюрăн кăшт тăртаннă пек курăнакан пĕчĕк тутисене, тӳрĕ те хитре сăмсине, чăмăр кăкăрĕсене куратăп... Сăнран пăхсан, пĕрре те пĕр тăвансем пек мар вĕсем. Пĕри çӳллĕ те яштака, хитре, тепри лутра, ăшă кăмăллă пулсан та, сăнран тӳрккесрех. Анчах темскер пурах вĕсен пĕрпекки. Темле пĕрне-пĕри çав тери сума-суса, шăкăлтатса калаçса пурăнакан пĕчĕк ачасене аса илтереççĕ вĕсем мана.

Иван Петрович калаçма чарăнсанах Нюра хăйĕн тĕпсĕр хура куçĕсене ман çине куçарчĕ.

„Юрататăн-и эсĕ те ман пиччене? Килĕшеççĕ-и сана унăн ĕçĕсем?"—теççĕ вăл кăшт шикленерех пăхакан пысăк куççем.

Эпир Иван Петровичăн кĕнекисене пăхса тухрăмăр, апат çирĕмĕр. Кăнтăрлапа Нюра тухса уçăлса çӳреме кăмăл турĕ.

Ирхине ура айĕнче кĕленче пек шĕлтĕртетсе ванакан пăр халь исленсе сĕлкĕш пулнă. Иван Петрович сасартăках пусăранса вуçех те калаçми пулса ларчĕ. Тăтăшах вăл шыв кӳленчĕкĕсене кĕре-кĕре каять, тĕмескесем çинче такăнать. Вара куçлăхне хывать те чылайччен ăна сăмса тутрипе сăтăркаласа тăрать. Çĕнĕ костюм, çӳхе пальто тăхăннаскер, вăл ирĕк уйра, çутçанталăк ытамĕнче темле çухалса кайнă пек, темĕншĕн ӳкĕнсе пынă пек туйăнать.

Сук хĕрринелле çитес чух Иван Петрович чарăнчĕ те мана хулпуççинчен тĕкрĕ.

— Итлĕр-ха, Федор Ильич. Манăн пуç ыратма пуçларĕ. Эсир çӳрĕр... Халь васкама кирлĕ мар... Канмалли кун вĕт.

Вăл йăмăкĕ çине айăплăн пăхса илчĕ те килнелле утрĕ.

— Суять!—терĕ Нюра, Иван Петрович курăнми пулсанах.—Пуç ыратать пулĕ тетĕр-и эсир унăн? Тыттарать. Ĕçлеме карĕ. Яланах çапла вăл... Куç çутине пĕтерчĕ ĕнтĕ хăйĕнне.

— Питĕ юрататăр пулас эсир пиччĕре.

Нюра темĕнле вăрттăн япала çинчен пĕлтернĕ пек ман çине вăтанса пăхса илчĕ те, пуçне усрĕ.

— Тĕлĕнмелле çын вăл. Вăл маншăн пичче те, атте те... Эпĕ уншăн кирек хăш вăхăтра та хам пурăнăçа пама хатĕр.

Эпир Сук хĕррине çитсе шыва май аналла утрăмăр.

— Пĕлетĕр-и? — терĕ те Нюра, çурхи тĕнче пекех ытарайми хитрескер, çӳçе йывăçĕ çумне тайăнса тăчĕ. — Вăл вунтăватта кайсан тин ялти шкула вĕренме кĕнĕ. Института çитсен, çĕрле типографисенче ĕçлесе мана вĕренме кĕме пулăшрĕ, хăй вĕренсе тухрĕ. Шутлăр: вунтăваттăра — хут пĕлмен ача, халĕ—институт пĕтернĕ çын, писатель...

— Кăмăлĕ те питĕ аван унăн.

— Çав тери... Ача пек вăл. Анчах... Ытла та кĕнекесем çине тăрăнчĕ. Çĕрле тăра-тăра ларать. Нимĕçле калаçма вĕренчĕ, акăлчанла перкелешет...

— Эпир сасартăк сĕм вăрмантан аслă уя сиксе тухнă çынсем çав, Ню... Анна Петровна. Тĕнчере мĕн кăна пулман пуль, мĕн кăна çырман, шутласа кăларман пуль эпир кĕтӳ хыççăн çӳренĕ вăхăтсенче! Тепĕр чух сехре хăпса каять вĕт, вăй пĕтсе ларать. Кашнинех ик-виç ĕмĕр кирлĕ эпире çавсене пĕлсе çитме.

Нюра йывăç çумĕнчен уйрăлчĕ те ман çумма сывăха-сывăха пырса тăчĕ.

— Калăр-ха, — терĕ те вăл, шăннипе пулас, кăштах çӳçенсе илчĕ, — чăн-и вăл, эсир хăвăр колхоз валли электростанци проекчĕ тунă, теççĕ? Сирĕн çинчен-и вăл хаçатра çырчĕç?

— Çапла,—терĕм эпĕ.—Облăçра ырларĕç ăна. Халь Мускава ятăмăр.

— Апла эсир инженер пулма та пултаратăр пуль?

— Пĕрер çул шкулта ĕçлесе пăхас тетĕп. Унтан—аспирантурăна...

Нюра темшĕн ассăн сывласа илчĕ те каллех йывăç çумне таянчĕ, çĕрелле пăхма пуçларĕ.

— Ĕçлеме сире, паллах, урăх хулана яраççĕ.

Унăн сассинче пĕр вăхăтрах татса калани те, ыйтни те, шикленни те илтĕнет.

— Çук, — терĕм эпĕ.—Ĕçлеме эпĕ çак шкулах килесшĕн. Директорпа та калаçса татăлнă ĕнтĕ.

Нюра пĕчĕк ача пек сасартăк кулса ячĕ те çул çине чупса тухрĕ.

— Кайрăмăр киле!..

III

Иван Петрович мана ыйăхран каярах юлса вăраннă сынна аса илтеретчĕ. Кунĕлех васкать вăл: вуласа пĕтереймен кĕнеки çине пăшăрханулăн пăха-пăха илсе, тетрадьсем юсать, васкаса хаçат-журналсене пăхса тухать, нимĕç чĕлхи учебникне тытса ларать. Тарпа кăшт сарăхарах пайă костюмĕн кĕсъисенче унăн яланах тĕрлĕ словарьсем, справочниксем, алçыру тĕркĕмĕ.

Апат çисе ларнă чухне те, савăнна чух та, шкулта та унăн йăвашшăн та кăшт тĕпчесерех пăхакан куçĕсенче пĕр шухăш, пĕр ĕç асран кайманни сисĕнсе тăрать. Вăл яланах хайĕн пулас произведенийĕсем çинчен шухăшлать, унти геройсемпе пурăнать пулас...

Каç. Эпĕ алăк патĕнчи пĕчĕк сĕтел хушшинче киве журналсем пăхкаласа ларатăп. Иван Петрович вулать. Нюра абажур сулхăнне, тĕттĕм кĕтессе кĕрсе ларнă та, чĕнтĕр çыхать. Эпĕ пуçа çĕклемесĕрех вăл ман çине пăхнине туятăп.

Тулта çумăр çăвать, çил тулать.

Ăшра темшĕн кичем, пусăрăнчăк. Эпĕ Нюрăна малтанхи хут курнине, И. хулинче иртнĕ вăхăтсене аса илетĕп.

Мӗнле хӑвӑрт та сисӗнмесӗр иртеҫҫӗ иккен кунсем! Нумаях та пулмасть хӗллеччӗ, ак халь урамра—июнь каҫӗ, чӗреслеттерсе ҫумӑр ҫӑвать, Сук канӑҫсӑррӑн шавлать.

Ыран эпӗ тухса каймалла. Пӗрте пӗр шутласан, пурте чиперех темелле ӗнтӗ. Хушвӑ ӗҫе тунӑ. Практика пӗтрӗ. Кӗсъере—ман ӗҫе ырлакан хут. Малта—госэкзамен, шкулти шавлӑ кунсем, хӗрӳ ӗҫ.

Анчах ҫапах та, ҫиелтен пӑхма пурте йӗркеллӗ пек курӑнать пулсан та, ӑшра темӗскер ҫитмест, темӗскер пӑшӑрхантарать. Тӳррипе, апла калама та кирлӗ мар ӗнтӗ, мӗншӗн тесен эпӗ вӑл пӑшӑрханавӑн ятне те, сӑлтавне те пӗлетӗп.

Малтан курнӑ чух мана Нюра ҫав тери хӑюллӑ та уҫӑ кӑмӑллӑ хӗр пек туйӑннӑччӗ. Анчах каярахпа вӑл йӑлтах улшӑнса кайрӗ. Пӗрре вӑл хӑйне пӗчӗк ача пек кӑшт вӑтанарах тыткалать, калаҫать, кулать, ювашар пырса ларса манпа пӗрле кӗнеке вулать. Ун пек чух вӑл хӑй хӗрача иккенне те манса каять темелле. Тепрехинче мана курсан, сасартӑк хӗрелсе каять те, хальхи пек, пӗр-пӗр тӗттӗмрех кӗтессе кайса ларса, алӗҫ тума тытӑнать. Вара ҫӗрепех унран пӗр сӑмах та кӗтсе илейместӗн.

Пӗррехинче Сук ҫине кимӗпе ярӑнма кайнине лайӑх астӑватӑп. Хӗвеллӗ ӑшӑ кунччӗ. Эпир пӗчӗк кимӗпе юхӑма хирӗҫ инҫе-инҫе хӑпарса кайрӑмӑр. Нюра шухӑша кайса шыв ҫине усӑнса аннӑ ҫӗмӗрт тураттисене тата-тата илет, уҫӑ сывлӑша тулли кӑкӑрпа сывласа ман урлӑ аяккалла тинкерет. Мӗнле хитре те тарӑн унӑн куҫӗсем! Манӑн Нюрӑн ирхи шуҫӑм пек илемлӗ пичӗ ҫине, пӗчӗк аллисем ҫине пӑхса ҫапла вӗҫӗмсӗрех малалла ишес килет. Пултӑрччӗ вӑл манӑн ӗмӗтӗм, таса шухӑшӑм...

Шыв кукрине ҫитсен, Нюра сасартӑк сиксе тӑчӗ те, кимме кӑшт ҫеҫ йӑвантарса ямарӗ.

— Эх, мӗншӗн эсӗ...—терӗ те вӑл, хӗрелсе, вӑтанса чарӑнса ларчӗ, пӗшкӗнсе кӗсмен аврине тытрӗ. — Ҫаврӑнар пуль каялла... Санӑн пирӗн ялта ҫуралмалла пулнӑ...

— Вара? — терӗм эпӗ. — Вара мӗн пулнӑ пулӗччӗ?

— Нимӗн те мар,—терӗ те вӑл, темӗскере ӑнланса илменнишӗн тарӑхнӑ пек пулса тутине ҫыртрӗ.

— Халӗ мӗнле? — ыйтрӑм эпӗ, ӑна куҫӗсенчен сӑнаса пӑхса. — Халӗ?..

Нюра шыв ҫинелле пӗшкӗнчӗ те урӑх пӗр сӑмах та чӗнмерӗ. Ун хыҫҫӑн ик-виҫӗ кун манран пӑрӑнарах ҫӳрерӗ.

Иван Петрович пирӗн хушӑри урлӑ-пирлӗсене, вӗҫ-

ленмен сӑмахсене сисет. Сисет ҫеҫ те мар, вӑл эп асапланнине те курать. Вӑл, тен, чунтанах мана пулӑшнӑ пулӗччӗ, анчах майне-шывне чухламасть. Халӗ те ак вӑл ассӑн сывласа илсе вӑйсӑр куҫӗсемпе ман еннелле пӑхать, куҫлахне хывать.

— Мӗнле? Мӗншӗн пӗри те чӗнместӗр? Тен шахматла выляса илӗпӗр?

Эпӗ ура ҫине тӑтӑм.

— Кайма вӑхӑт ӗнтӗ, чылай ҫӗр пулчӗ вӗт.

— А ҫумӑр? Тен кунтах сывӑрса кайӑр?

— Ҫук, килех каятӑп... Сыв пулӑр...

— Нюра, ӑсатса яр-ха эппин. Ну, чипер ҫитӗр.

— Ыр каҫ пултӑр эппин.

Ҫенӗхе тухсанах Нюра ман алла тытса чӑмӑртарӗ.

— Ыран каятӑр эппин.

— Каятӑп, — терӗм эпӗ. — А эс ӑҫтан пӗлетӗн?

— Пӗлетӗп. Ҫапла сывпуллашмасӑрах тухса каясшӗнччӗ-и?

— Эпӗ ҫыру ҫырса хӑварас тенӗччӗ.

Нюра пӑртак чӗнмесӗр тӑчӗ те кайма пуҫларӗ.

— Ну, чипер ҫитӗр эппин...

— Тӑхта-ха, — терӗм эпӗ. — Ҫаплипех пӗтет-и вара пирӗн паллашу?

— Сивӗ, — хуллен пӑшӑлтатрӗ Нюра.

Эпӗ ӑна ачашшӑн ыталаса плащ аркипе чӑркарӑм та чуптуса илтӗм.

— Ыранччен,—терӗ те Нюра хуллен ман ытамран шуса тухрӗ.—Ыран клубра вечер пулать. Пырӑр...

Пӳрт алӑкӗ шалтлатса хупӑнсан та, эпӗ темиҫе минут хушши антраса ним ӑнланмасӑр тӑтӑм. Шалтӑрах вӑй пӗтсе килчӗ. Чылайран тин ман хӑлхана урамри сас-чӳсем илтӗнме пуҫларӗҫ. Ҫумӑр чарӑннӑ иккен. Ҫил те ҫук. Ҫурт хӗрринчен темӗнлӗ канӑҫлӑ та ырӑ саслӑн янраса шыв тумласа тӑрать.

Манӑн ҫывӑрас килместчӗ. Эпӗ ӳсӗр ҫын пек тайкаланса ҫенӗхрен тухрӑм та уялла утрӑм.

* * *

Киле хӑш вӑхӑтра таврӑнса выртнине, тепӗр кун мӗн туса ирттернине эпӗ халь хам та лайӑххӑн астумастӑп. Каҫ анчах шалкӑм ҫумӑр ҫуса иртнӗ пулсан та, ҫав тери пӑчӑ пулчӗ вӑл кун. Каҫпала ҫанталӑк пушшех тӑвӑрланса ҫитрӗ, сывлама кансӗрлене пуҫларӗ. Ҫавна пулах вечерта ташлакансем сахал пулчӗҫ. Пӗр вуникӗ сехетсем тӗлнелле Нюра хӑйӗн юлташӗсемпе сывпуллашрӗ.

Эпĕ çĕрĕпех вăл мĕнле ташланине, унăн хăйне расна çутăпа ялкăшса тăракан хура куçĕсене, кăшт шурăхнă сăнсăпатне сăнаса лартăм. Нюрăн пур хусканăвĕсенче те теменле вăрттăн шухăш, пĕр эпĕ кăна асăрхама пултаракан çепĕçлĕх пурри сисĕнсе тăратчĕ.

— Эсир пымастăр-и?—терĕ те вăл, хăйĕн вăрттăнлăхне пытарса тăраймасăр кулса ячĕ.—Хăратăп эпĕ... Ну, сывпулăр, хĕрсем.

Çурхи хурăн пек яштака пӳ-силлĕ те илемлĕскер, вăл пĕр самантра урама чупса тухрĕ, хускалмасăр ларакан йывăççем хушшипе васкаса аналалла утма тытăнчĕ.

— Кĕçех аслати пуçланать,—терĕм эпĕ, Нюрăпа тан аран-аран ĕлкĕрсе пырса.

— Çĕрĕ те чылай пулчĕ пулас,—тесе, Нюра тата васкарах утма пуçларĕ.

— Мĕншĕн ун пекех васкатăр?

— Часрах киле çитес.

— Киле-и вара эсир?—хăраса ӳкрĕм эпĕ сасартăк.

— Тата ăçта кайăпăр?

— Айтăр Сук хĕрринелле.

Нюра килĕшрĕ. Анчах вăл унталла та çав-çавах васкаса утать. Эпир тĕттĕм урам вĕçне тухса Сук хĕрринелле пăрăнтăмăр. Тĕксĕмĕн курăнса ларакан çуртсем хыçала тăрса юлчĕç. Халь ĕнтĕ тӳпе те, çĕр те пĕр тĕслĕ—пăч тĕттĕм. Сайра хутран çеç аякри вăрмансен леш енче çиçĕм йăлтăртатса илет. Тавăл умĕнхи çанталăк пăчă, тăвăр, лăпкă.

## IV

Эпир иккĕнех. Пĕр утăмра Сук шăппăн юхса выртать. Çыран хĕрринче, пиртен инçех те мар, хурсем лараççĕ. Сывлăшра шăркана ларнă ыраш шăрши кĕрет.

Нюрăн алли кăвар пекех.

— Анна Петровна!—тетĕп эпĕ шăппăн, чĕтрекен сасса пусарма тăрăшса.—Анна Петровна, Анечка, Нюра... Ăçтан тавăлса антăн эсĕ ман умма? Мĕнле тĕл пултăмăр эпир пĕрне-пĕри?

— Турта...—тет те Нюра телейлĕн кулса илет.

— Кала-ха, Нюра, юрататăн-и эсĕ мана чăнах? Сума сăватăн-и кăшт та пулин?

Нюра хăвăрт-хăвăрт сывлать, ман алла вĕçертмесĕрех чул çинчен сиксе тăрать.

— Куратăн вĕт—килтĕм...
— Çук, кала-ха, юрататăн-и?
— Юрататăп... пулĕ теп.
Эпĕ ун аллине чăмăртарăм.
Нюра хăвăрттăн каялла чакрĕ.
— Çук, халь мар... Кайран... Кĕркунне. Килетĕн вĕт?
— Экзаменсем пĕтсенех килетĕп. Кĕркуннечченех килетĕп. Вара ĕмĕр пĕрле пулăпăр, пĕрле вĕренĕпĕр.
Нюра мана куçран пăхма тăрăшнă пек çывăха-çывăха пырса тăчĕ.
— Çук, киле кайма вăхăт ĕнтĕ. Кĕçех ак тăвăл пуçланать.
— Тăхта-ха кăштах...
— Айтăр теп...
-- Хăрамастăн пулĕ те эсĕ манран?
— Çук та ара... Кайма вăхăт ĕнтĕ.
Нюра пуçне усрĕ те ман хул çине тайăнчĕ.
-- Кĕркуннеччен калас мар, палăртас мар тевĕччĕ. Юрĕ ĕнтĕ... Чи малтан курсанах эп сире...
Вăл хăйĕн сассине тăкам илтесрен хăранă пек, çавтери хуллен те майĕпен калаçать.
Эпĕ Нюрăна ачашшăн тытса пĕрре чуптума ĕлкĕрнĕччĕ кăна, вăл сасартăк вĕçерĕнчĕ те аяккалла чупса кайрĕ.
— Ау!.. Атьăр часрах, тăвăл килет...
Чăн та, тĕттĕм тӳперен сивĕ çил вашкăртма пуçларĕ, çывăхрах аслати кĕрлесе кайрĕ.
Сук хĕрринчи хурсем килелле хускалчĕç.

* * *

Эпĕ çав каçах, çил-тăвăл тапраннине пăхмасăрах, киле тухса утрăм. Тул çутăлса çитнĕ çĕре хуларан çирĕм çухрăмраччĕ эпĕ. Кăнтăрла тĕлне тăван яла пырса кĕтĕм.
Тепĕр кун кăнтăрла, 1941-мĕш çулхи июнĕн çирĕмвиççĕмĕшĕнче, эпĕ каялла И. хулине пырса çитрĕм. Анчах ĕлкĕреймерĕм. Нюрăпа пиччĕшĕ вăрçă тапраннă кунах мобилизаци йĕркипе Куйбышев хулине тухса кайнă иккен...
Çавăнтанпа пирĕн çулсем уйрăлса кайрĕç. Кĕçех эпĕ хам та фронта кайрăм, нумай хутчен çапăçусенче пултăм, суранланса госпитальре те выртса тухрăм.
Кăçалхи январь уйăхĕн уяр кунĕсенчен пĕринче эпĕ фронта çĕвĕрен килекен салтаксем хушшинче И. хулинчи шкул директорĕ пулнă Сергей Кузьмича палласа илтĕм.

Иксӗмӗр те питӗ савӑнтӑмӑр. Вӑл мана пӗр çар чаçӗнче тӑлмач пулса ӗçленӗ Иван Петрович вилни çинчен пӗлтерчӗ. Нюрӑран мӗн фронта тухса кайнӑранпах пӗр сас-хура та çук тет иккен.

Тӗркӗшӳ вӑхӑтсем, çамрӑклӑх кунӗсем аякка-аякка тӑрса юлчӗç, вӑрçӑ тӗтӗмӗпе хупланса курӑнми пула пуçларӗç. Анчах хура куçлӑ хитре хӗре эпӗ кашни çапӑçу умӗнех аса илетӗп. Мана темшӗн пирӗн çулсем таçта хӗвеланӑçӗнче, уйрӑлнӑ чухнехи пекех ӑнсӑртран пӗрлешессӗн туйӑнать...

Юлташӑм, ӑçта эсӗ?

1944 çул, январь.

---

## ТĂВАНСЕМ КĔТЕÇÇĔ

Пĕчĕк Стасик аслашшĕ Казимир темшĕн тăтăшах Седличи местечкине çӳреме тытăнчĕ. Урамра сивĕ çумăр шăпăртатать, пахчари йывăç тураттисене çил туллать, вăл çаплах хăйĕн яланхи кĕске кĕрĕкне тăхăнса лартать те хĕвелтухăçнелле тухса утать.

Стасик пӳрте пĕчченех тăрса юлать.

Тулта кĕркунне. Тӳпере, пăтранчăк шыв пек, талккишпех хуп-хура пĕлĕтсем йăшăлтатаççĕ. Ирхине пуçласа каçчен, унтан çĕрле пуçласа ирччен çумăр çăвать. Аслашшĕ таврăнасса кĕтсе, Стасик кăмака çине хăпарса ларать те урисене кивĕ сăхманпа пĕркет. Пахча енчи чӳречен çӳлти кĕтессинчен сарă йăмра çулçи курăнать, çилпе çенĕк алăкĕ уçăла-уçăла хупăнать, тĕпел кукринче шыв тумлани илтĕнет.

Стасик, йывăр хуйхăпа антраса ӳкнĕ мăн çын пек, майĕпен енчен енне сулланса, тĕлĕрме тытăнать. Те сивĕ ăна, те ăшă, те хуйхăрать вăл, те ним çинчен те шухăшламасăр тĕлĕрсе ларать—ăна вăл хăй те лайăххăн пĕлмест. Унăн чĕрине темĕнле йывăр та паллă мар хăрушлăх пусса тăрать...

Çывăрса каяс тесе, Стасик аслашшĕ сăхманĕпе пуç çинчен пĕркенет те куçĕсене хупать. Анчах кăшт ăшăнсанах вăл вăрçăччен ăшшĕпе пыл татма кайнисене, чечексем çинче хуртсем сĕрленине, ăшă та тӳлек кунсене аса илме пуçлать. Сĕр-сĕр-сĕр-сĕр! сĕрлеççĕ вара хуртсем кăмăллăн та çепĕççĕн. Çурхи вăрманта кайăк-кĕшĕксем чĕвĕлтетеççĕ. Таçти йывăç çинче сиксе куккук аватать. Пыл шăрши кĕрекен сывлăша кăкăр туллин сывласа, Стасик çырма хĕрринелле чупать...

Савăнăçлă асаилӳ татăлать. Пĕр вăхăта тăн-пуçа темĕнле хура тĕтре карса илет, ăша сулхăн çапать. Станислав каллех утарти сăн-сăпатсене аса илесшĕн, анчах ун вырăнне куç умне ашшĕ Хĕрлĕ Çарпа пĕрле ялтан тухса кайни, амăшĕ хăйне Германие тытса кайнă чух выртса макăрнисем килсе тухаççĕ. Унтан вăл яла нимĕç салтакĕсем килсе

кӗнине аса илет те сасартӑк вӑранса тарласа каять, куҫне чарса пӑрахать. Вара ҫенӗк алӑкӗ уҫӑла-уҫӑла хупӑнни те, шыв тумлани те уҫҫӑн илтӗнме пуҫлаççӗ. Чӳрече умӗнче ҫаплах сарӑ ҫулҫӑ вӗлтӗртетсе тӑрать, пӳрт пӗренисем ҫумне кассӑн-кассӑн ҫумӑр шӑпӑртатса ҫапӑнать. Те кӑнтӑрла ҫитнӗ, те каҫ пулать—нимӗн те паллӑ мар. Станислав урайне анса сӗтел сунтӑхӗсене уҫса пӑхать. Анчах унта ҫӑкӑр татки мар, пӗр тӗпренчӗк те ҫук. Вӑл ӗсӗклекелесе каллех кӑмака ҫине хапарса ларать, майӗпен енчен-енне сулланма тытӑнать. Пӗчӗк Стасик ӑшӗнчи пекех, тулта тӗксӗм те кичем. Ачан макӑрас килет. Хӑйӗн ашшӗ ҫухални ҫинчен, амӑшне нимӗҫсем тытса кайни ҫинчен, хӑйӗн хырӑмӗ выҫҫи ҫинчен темӗнле ҫывӑх та кӑмӑллӑ ҫынна каласа парас килет унӑн...

* * *

Пӗррехинче ватӑ Казимир Седличи местечкине хӑйпе пӗрле Стасика та илсе кайрӗ.

Пасар урамӗнче пӑртак ҫӳресенех пӗчӗк мӗшӗлти ывӑнса ӳкме пуҫларӗ. Сӑхманӗн арки ҫине пусать те пылчӑк ҫине персе анать, вара сиксе тӑрса каллех аслашшӗн кӗрӗк аркинчен ҫавӑрса тытать.

Ҫӳресен-ҫӳресен вӗсем Сож шывӗ хӗрринчи пӗр шавлӑ ҫурт патне ҫитсе чарӑнчӗҫ. Станислав тем ыйтма хӑтланса пуҫне ҫӗклесе пӑхрӗ те сасартӑк чӗтресе ӳкрӗ. Вӑл кӗрӗк аркинчен тытса пыракан ҫын кӗтмен ҫӗртенех нимӗҫ салтакӗ пулса тӑчӗ. Станислав урам варринелле ыткӑнчӗ, унтан пахчасем хыҫне тухса пӗр лупашкана анчӗ. Вара тин пӑртак ларса сывлӑш ҫавӑрчӗ те каялла утрӗ.

Площадьре, аллисене хыҫалалла тытса, нимӗҫ салтакӗ хуҫалла уткаласа ҫӳрет.

Аслашшӗне шыраса тупаймарӗ вӑл кун Стасик, анчах пасар урамне пырса ҫавӑрӑнма шикленчӗ. Кам пӗлет, тен унта халӗ те нимӗҫ салтакӗ тӑрать пулӗ...

Каҫхине ҫывӑраймарӗ вӑл. Пӗр ҫӗре тӗршӗнсе кӑтӑш пулать,—таҫта хӑйӗн ятне чӗннӗ пек туйӑнать те, вӑл сиксе тӑрса унталла чупать. Стасик унта ҫитнӗ ҫӗре сасӑ местечкӑн тепӗр енне куҫать.

Унтан таҫта виҫ-тӑватӑ хут пӑшал кӗрслетрӗ.

Ирхине вӑл, шӑнса пӗлмиех пулнӑскер, пӗр тӑкӑрлӑкпа ӗнерхи урама мӑкӑлтетсе тухрӗ те тӳрех аслашшӗне курчӗ, савӑннипе чупса пырса ыталаса илчӗ. Ватӑ Казимир

темшӗн ярханах, ҫара пуҫӑн. Кӗрӗкне йӳле янӑ. Ҫӳҫӗ ҫинче сарӑ улӑм пӗрчисем курӑнаççӗ.

— Эс чӗрех-им, ачам?—тет вӑл, Стасик патне пӗшкӗнсе. Хӑй, мӑнукӗ тупӑннине ӗненмен пек пулса, ӑна ҫаплах пуҫӗнчен, ҫурӑмӗнчен ачашлать.

— Ӑҫта ҫӗр каҫрӑн, Станислав?

— Сана шырарӑм,—тет шӑнса кӳтнӗ Стася.

— Эпӗ сана ҫухалчех пулӗ тесе. Кунта темӗнле халӑх та пур та... Тата нимӗҫсем хытӑ ашкӑнаççӗ. Илтрӗн пулӗ каҫхине пӑшал пенине? Виҫӗ ҫынна персе пӑрахнӑ, тет. Хам та кӑшт ҫеҫ лекеттӗм...

— Кутамкку ӑҫта, асатте? Манӑн ҫиес килет те...

— Кутамкка-и? Ӑна нимӗҫ салтакӗ туртса илчӗ.

Ватӑ ҫын шиклӗн йӗри-таврa пӑхкаласа илет те ҫывӑхра ҫын ҫуккине кура, каллех калаҫма тытӑнать.

— Ҫапла ҫав, нимӗҫ салтакӗ илсе кайрӗ ӑна, Стасик... Вӑрӑ пек тармарӗ вӑл, туртса илчӗ те хулленех утса кайрӗ. Пырса лек-ха эс ун патне кутамккуна илме хӑтланса..

Ик-виҫӗ ҫухрӑм пек кайсан, уйри тын ани ҫинчи пуш ӳплере вӗсем канма ларчӗҫ. Айлӑмра Сож шывӗ тӗксӗмӗн йӑлтӑртатса выртать, чӗрӗ сывлӑшра пароход кӑшкӑртнисем илтӗнеççӗ. Вӑхӑтлӑха чарӑннӑ ҫумӑр каллех вӗттӗн лӑпсӑртатма пуҫларӗ, айлӑма йӑсӑрланса тӑракан ҫӑра тӗтре карса илчӗ.

— Хура кунсем ҫитрӗҫ ҫав, ачам,—тет старик, сухалӗ ҫинчи улӑм пӗрчисене тасатса.—Ҫынсем пек пурӑнма тытӑннӑччӗ кӑна, нимӗҫсем килсе хупларӗҫ, пурнӑҫа сывлаймиех туса хучӗҫ. Мӗн чухлӗ халӑх пӗтмерӗ пуль икӗ ҫул хушшинче, калама та хӑрушӑ... Ытла та ним тума та юрамасть вӗт. Ҫыхса пӑрахнӑ ҫын пекех хускалмасӑр пурӑнас пулать.. Мана пырӗ ӗнтӗ, эпӗ ватӑ, анчах сана ку тамӑкран хӑтарасчӗ... Ҫак хушӑра мӗн пирки час-часах кунта ҫӳрерӗм пуль тетӗн эсӗ мана? Эсӗ ҫамрӑк-ха ҫав, пурне те ӑнланса ҫитейместӗн. Кунтан инҫех те мар фронт тӑрать. Ун урлӑ каҫса ӳкес пулсан—пурте пулатчӗ санӑн... Хӗрлӗ Ҫар каялла таврӑниччен вилсе кайӑп та, вара сана та кун пулмӗ.

Старик йӳле янӑ кӗрӗк аркисене хупларӗ те сивӗ ҫӗр ҫине хутланса ларчӗ, куҫне хупрӗ.

— Ватлӑхӑмра хамӑн та ӑшӑ кӗтесре пурӑнса курас килетчӗ.. Ытла та ӗшенсе ҫитрӗм вӗт ӗнтӗ эпӗ.

Стасик аслашшӗ ҫине пӑхать. Чӑн та, питӗ те ватӑ иккен унӑн пӗртен-пӗр тӑванӗ, хӳтӗлӗхӗ. Пичӗсем сарӑхса

пĕрçеленсе ларнă, çÿçĕсем мамăк пекех, çемçе те шурă. Мĕнле утса çитесшĕн-ши вăл икçĕр çухрăма? Тата инçешши вăл икçĕр çухрăм тени?

— Седличчире манăн пĕр пĕлĕш пурччĕ, — тет старик хурлăхлăн.—Сана фронт урлă каçма пулăшăп, тетчĕ. Халĕ пулмарĕ ĕнтĕ... Ĕнер персе пăрахнă ăна нимĕçсем. Хамăр тĕллĕнех тăрашса пăхма тивет ĕнтĕ.

* * *

Таса ĕмĕт çитме кирлĕ. Вăл çитетех.

Ватă Казимир пĕлет: асла Сож шывĕ те вĕççĕр мар. Ним тума та çук, вăрçăра вăл çитĕннĕ ывăлне çухатрĕ, кинне нимĕççем тытса кайрĕç. Арăмĕ те выçăх вилчĕ. Халĕ ак таврара пур çĕрте те нимĕççем ашкăнса çÿреççĕ. Анчах вĕсен те шалçи тулма кирлĕ, вăл тулатех, мĕншĕн тесен тĕнчере Хĕрлĕ Çар пур, Сталин пур.

Старик хăйпе юнашар утса пыракан Стасик çинчен куçне илет те Сож еннелле пăхать. Çапла, халлĕхе унта тĕтре, йăсăрланса тăрать, анчах вăл та сирĕлĕ.

Вĕтĕ çумăр пĕрĕхет, çил туллать. Ватă çын вĕсене асăрхамасть. Ури айĕнчи шĕвĕ пылчăка сирпĕтсе, вăл шавах малалла утать. Кĕçех ак вăл киле çитĕ. Вара хатĕрленĕ те çула тухĕ. Пĕлет старик: йывăр пулĕ çул, çапах çитес çĕре вăл çитмеллех.

Çан-çурăмне шăмă таранах сивĕ витнĕ пулин те, чĕринче унăн ăшă та тÿлек...

Пĕр çур çула пек çитсен, вĕсем нимĕç салтакĕсен ушкăнне тĕлпулчĕç. Салтаксем çар ĕçне вĕренеççĕ пулас, темскер миномётсемпе аппаланаççĕ. Старик вĕсене курмишех пулчĕ. Вăл пуçне çĕрелле чикрĕ те Стасик аллинчен тытса, çул айккинелле пăрăнчĕ. Халь ун хăйне тем тусан та, никама та нимĕн те каламалла мар. Стасика фронт урлă каçарса ярсан, кирек мĕн тусан та юрĕ вара, мĕншĕн тесен вăл ватă та чирлĕ. Ăна ĕнтĕ кун чухлĕ пурăннипе те çитет...

Ик-виç çĕр метр кайсан, хыçалта сасартăк миномет пенĕ сас кĕрслетрĕ, тискеррĕн шăхăрса килсе вĕсен умне мина ÿксе çурăлчĕ. Старик мĕн пулнине ăнланса иличчен тепĕр мина вĕсен хыçне пырса ÿкрĕ. Çывăхранах осколоксем шайкаса иртсе карĕç, пылчăк сирпĕнчĕ.

Сасартăк юр пек шурса кайнă старик Стасика çавăтрĕ

те аяккалла ыткăнчĕ, анчах виççĕмĕш мина вĕсем халĕ кăна тăнă вырăна пырса ÿксе иккĕшне те çĕре ыватса ячĕ.

«Мишень пултăмăр иккен»...—ăнланса илчĕ ватă Казимир тăнне çухатас умĕн.

* * *

Стасик сылтăм аллине ерипен пичĕ çине илсе хучĕ, урине хутлатрĕ. Унтан тăрса ларма хăтланса чавсисем çине тĕренчĕ те, сасартăк таçтан вĕçерĕнсе кайнă пек, каллех çĕр çумне пырса çапăнчĕ. Аллине çĕклеме хăтланса пăхрĕ—вăл та йывăррăн кăкăр çине ÿкрĕ.

«Ăçта-ши асатте?—шухăшласа илчĕ вăл шиклĕн, хăйне килте пек туйса:—Яланах пĕччен хăварать... Шыв ĕçесчĕ...»

Шăп Стасикăн пуçĕ тĕлĕнче, кăн-кăвак тÿпере, уйăх çутатса тăрать. Çумăр чарăннă. Кĕрхи уй тăрăх сивĕ çил йăштăртатса юхать. Таçта аякра-аякра йытăсем вĕреççĕ, такам пуртăпа пĕренене шаккани илтĕнет.

Стасик йĕп-йĕпе тара ÿкнĕ. Вăл йывăррăн та хăвăрттăн сывласа çаплах тÿпенелле пăхать, ним ăнланмасăр аякри сас-чÿсене итлет. Ун сылтăм аяккине паçăртанпах ĕнте темскер пĕçертсе тăрать. Анчах хускалма вăй та, кăмăл та çук. Шыв ĕçес килни аптăратмасан, капла тахçанччен выртма пулассăн туйăнать.

Иртнĕ каççенчи пекех, таçта вăхăтран-вăхăта пăшал переççĕ, унтан йытă хамлаткаласа илет. Вара каллех шăп, ниçта пĕр сас-чĕвĕ те илтĕнмест. Эх, шыв пулас пулсан!..

Стасик типсе çуркаланнă тутисене чĕлхипе çулласа илчĕ те аллине пĕçерсе тăракан çĕрелле шутарчĕ. Мĕн хăямачĕ-ши вăл, чăн та? Кăмаках çапла хĕрсе çитнĕ-ши?

Аллине темле ăшă та çилĕм пек çыпăçакан япала лекрĕ. Сăхманĕ те вăл тĕлте лачкамах пулнă. Стасик аллине аран-аран куçĕсем патне илсе пычĕ те, сасартăк тăрса ларма хăтланса, каллех тăнне çухатрĕ.

Юн! Халĕ вăл хăйпе мĕн пулса иртнине те, хăй ăçтине те йăлтах ăнланчĕ.

Кĕрхи уй çав-çавах канăçлăн та тÿлеккĕн сывлать, хытхурасемпе армутисене хускаткалать. Уй варринче, пĕринчен-пĕри инçех те мар, икĕ хура мĕлке выртать. Пĕри—пĕчĕк Стасик, аллисене сивĕ çĕр çине саркаласа пăрахнă та, тÿпенелле пăхса выртать. Тепри, унăн аслашшĕ, кĕçвĕç сиксе тăма хăтланнă пек, сылтăм урине хăй айне хутлатса хунă, аллисем пуç айĕнче. Вăл темиçе хут та урисем çине тăма хăтланнă пулас, мĕншĕн тесен малтан ÿкнĕ вырăнтан Стасик еннелле хуп-хура йĕр тăсăлса выртать...

Партакран Стасик тăна кĕрсе пуçне çĕклерĕ. Вара пĕтĕм чун хавалĕпе тăрмашса ӳпне май çаврăнса выртрĕ те пуçне йĕпе курăк çине хучĕ. Капла ĕçес килни те кăштах лăпланчĕ, питне нӳрĕ çапрĕ. Мăнтарăн чĕрлĕх шывĕ, мĕн пек паха-ши эс çут тĕнчере!.. Виç-тăват утăмра аслашшĕ курăнать. Майĕпен, чылайччен кана-кана выртса, Стасик ун патнелле упаленме тытăнчĕ...

— Асатте!..

Старик чĕнмест. Стасик, хăй сассинчен хăй хăранă пек пулса, аслашшĕнчен пĕр утăмра шăпланса выртрĕ. Текех саспа чĕнесси килмерĕ ун: тепре чĕнсен те чĕнмесен, вăл вилсех кайнă пулсан, мĕн тăвĕ-ха вара Стасик çак сивĕ уйра пĕр-пĕччен? Капла çапах хăть ăшра шанчăк пур..

Анчах нумаях чăтса выртаймарĕ, хуллен ахлаткаласа пуçне аслашшĕн пуçĕ çумне пырса хучĕ. Питне старикĕн нӳрĕ çӳçĕ лексенех унăн пырне темскер тулса ларчĕ те, вăл саспах макăрса ячĕ. Эх, мăнтарăн турри, çакăнта ун вăйĕ пулас пулсан, вăл йăтĕччĕ те хăйĕн аслашшĕне килне илсе кайĕччĕ, ăна нихçан та пĕр сив сăмах каламасăр упраса усрĕччĕ.

Стасик асапланкаласа аслашшĕн хăрах аллине туртса кăларчĕ те, чăх чĕппи амăшĕн çунатти айне тĕршĕннĕ пек, пуçне старикĕн хулĕ айне чикрĕ, чĕлхине аран-аран çавăркаласа пăшăлтатма тытăнчĕ:

— Асатте, тетĕп! Тăрсам ĕнтĕ... Хăратăп эпĕ... Киле каяс килет манăн... Киле... Унтан... Лере те... фронт леш енне те... кайăпăр... Шыв ĕçес килет манăн... Шыв...

Стасик ĕсĕклесе илет те куçне çанни вĕçĕпе шăлса типĕтет.

— Макăрмастăп эпĕ... Тăр та... хуллен... кайăпăр... Пулăшăп эпĕ сана. Кăштах канăпăр та.. Вара... Мĕн... нимĕçсем те çук халĕ... Курăнмаççĕ вăн... Эпир... çул... айккипе кайăпăр. Утара... куçăпăр пурăнма. Унта шыв та... пур.

Вăл пуçне нӳрĕ çĕр çине хурать те чылайччен татăлса макăрать. Унган темскер аса илнĕ пек пулса, каллех чавса çине тĕрĕнет, хĕвĕнчен çĕтĕк хут татки туртса кăларать.

— Эппин тӳрех лере утăпăр.. Фронт патнелле... Аттене шыраса тупăпăр... Акă унăн сăнĕ... Леш, ху пани... Пĕлтĕртенпех хĕве чиксе çӳрерĕм эпĕ ăна...

Аслашшĕ чĕнмест. Хăрах аллине туртса кăларнипе пуçне чалăштарса хунă та вăл, çĕрти темле сасса итленĕ пек, куçне хупса выртать. Аяккинчи вĕри ăшнелле кĕнине туйса, Стасик та шăпланать. Сывлăшĕ унăн тăвăрланнăçем тă-

вăрланса пырать, чĕри хăвăрттăн тапать, куçĕсем хурала-хурала килеççĕ. Анчах пур вилме пуçланă сынсем пекех, Стасик пурнăç çинчен шухăшлать, пурăнма ĕмĕтленет. Вăл ашшĕн карточкине хĕвне пуçтарса чикет те каллех аслашшĕне ӳкĕтлеме тытăнать.

— Тăрсам ĕнтĕ, асатте... Ӳлĕмрен эпĕ киле пĕччен юлсан та макăрмăп. Эсĕ каллех... Седличине çӳре... Анне килсен ăна та илсе кайăпăр... Фронт леш енне. Шыв... та.. илĕпĕр... Шыв та...

Стасик аташма пуçлать. Вăл аллисене сарса пăрахнă, шурса кайнă пичĕ тăрăх тар шăпăртатса юхать, кăкăрĕ хăвăрттăн хăпара-хăпара анать. Вăл каллех утарта пек: кайăксем чĕвĕлтетсе юрланине, шыв шăнкăртатса юхнине илтет пек вăл.

— Асатте,—тет те вăл тăрса ларма хăтланса суранĕ çине кайса ӳкет, туртăшма пуçлать.—А... сат... те... Чунăм... Шыв... Ил... тетни? Кайăк... сем...

Вăл юлашки хут тăма хăтланса пĕтĕрĕнсе ӳкет те ĕмĕрлĕхе шăпланать.

Уйра та шăп. Çумăр чарăннă. Уйăх та курăнмасть. Уй вимĕн те чĕнмест те, курмасть те, илтмест те. Мăнтарăн уйĕ! Мĕн чухлĕ вилĕ выртмасть пуль сан кăкăру çинче, мĕн чухлĕ куççуль юхмасть пуль сан çырмусемпе варусем тăрăх. Çапла тĕттĕм уйра йытăлла выртса вилме кăна çуралса ӳсет-ши вара, сан ырлăхусемпе уса курса пурăнатьши вара этем тени?

Çук, уй чĕнмест. Вăл чĕлхесĕр. Уй курмасть. Вăл куççăр...

Çутăлас енне кайсан, ватă Казимир тăна кĕрет те уй тăрăх упаленсе çӳресе Стасика шырама тытăнать.

* * *

Эрнесем, уйăхсем иртсе каяççĕ. Каллех çуркунне пулать, кăнтăр енчен ăшă çилсем вĕçсе килеççĕ. Кайăк-кĕшĕксем те тахçанах пусма ларнă ĕнтĕ, çилсем те хĕвел ăшшипе хĕртĕнсе хуллентерех çӳреме тытăнаççĕ, канма выртаççĕ. Анчах уйсем пушă та кичем. Никам та хускатман вĕсен кăкăрне кăçал, никам та хĕвелтухăçнелле сăхсăхса илсе пĕр пĕрчĕ вăрлăх пăрахман.

Савăнăç мар, хура инкек çӳрет кăçал Белоруссп çулĕсем тăрăх, ырлăх мар, хурлăх пусать çынсен чĕрине.

Çултан инçех те мар пĕчĕк тĕме курăнса выртать. Ун

ҫине хӗрлӗ, шурӑ, кӑвак чечексем шӑтса тухнӑ, сар кайӑк йӑва ҫавӑрнӑ.

Тӑлӑххӑн курӑнса выртакан ҫулпа пӗр старик уксахласа килет. Ун ҫинче пилӗкне кантрапа туртса ҫыхнӑ кивӗ пир кӗпе, улача йӗм. Урисенче ҫӑпата. Ҫарапуҫӑн вӑл. Аллине туя тытнӑ. Унӑн куҫӗсем чиперех пӑхаҫҫӗ пулсан та, нимскер те курмаҫҫӗ пулмалла, мӗншӗн тесен ялтан тухнӑранпах ӗнтӗ вӑл куҫне сиктермесӗр пӗр ҫӗрелле пӑхса утать.

Пӗчӗк тӗме тӗлне ҫитсен, старик ҫул айккинелле пӑрӑнать те, вилтӑприне хыпашласа тупса, ун ҫумне хутланса ларать. Сар кайӑк темиҫе утӑмра армут ҫине вӗҫсе ӳкет, ҫунаттисене сарса юрлама пуҫлать.

Вӗсем тахҫанах пӗрне-пӗри хӑнӑхнӑ ӗнтӗ.

Ватӑ Казимир (старик ҫавӑ) мӗн хӑй ура ҫине тӑнӑранпах кашни кунах ҫак вырӑна килсе каять. Хуйхӑпа сасартӑках куҫсӑр пулса ларнӑскер, ывӑлин ывӑлӗ ӑҫта выртнине вӑл чӗрипе туйса шыраса тупать. Анчах хӑйне пӑхса сыватнӑ ялйышсенчен вӑл Стасик вилни ҫинчен пӗр сӑмах та ыйтса пӗлмест. Ун чӗринче Стасик—сывӑ. Сывӑ ҫеҫ те мар, вӑл тахҫанах ӗнтӗ старик ӗмӗтленнӗ ҫӗре ҫитнӗ пек, фронт урлӑ каҫнӑ пек. Тӗнчере усалли темӗн чухлех пулма пултарать пулсан, мӗншӗн пӗрре старикшӗн ырри пулмалла мар?

Вӑл пӗлет: чӑнлӑх ҫӗнтеретех. Вӑл ҫирӗппӗн шанса тӑрать: ҫӑлӑнӑҫ килет. Вӑл килмеллех, мӗншӗн тесен, вӑл килмесен, старике ытла та йывӑр пулнӑ пулӗччӗ, ытла та хӳтлӗхсӗр те сивӗ пулӗччӗҫ унӑн юлашки кунӗсем..

Старик кашни кунах ҫӗре выртса итлет. Те ытла хытӑ кӗтнипе, таҫта аякра-аякра тупӑ сассисем кӗрленӗ пек туйӑнаҫҫӗ ӑна. Вара вӑл тӑрать те хӗвелтухӑҫнелле пӑхса каллех ҫул ҫине тухать, ялалла утать.

Юр пек шурӑ ҫӳҫлӗ суккӑр старик хиртен хуллен кӑштӑртатса таврӑннине курсан, ял-йышсем чышкисене хытӑрах чӑмӑртаҫҫӗ, нимӗҫе вӗлерме ҫӗҫҫисене хатӗрлеҫҫӗ.

1943.

## ÇЫРУ

Хытхура тĕмĕсем хушшинче çил варкăшать. Арман çунаттисем хытăрах шăхăрма пуçласанах, уй варинчи пӳрт тăрри юрпа çилхеленет, тĕтĕм тухнă пек шĕвеккĕн йăсăрланма тытăнать.

Çĕрле.

Арман хуралçин пĕчĕк пуртĕнче виççĕн: колхоз хурт-хăмăрçи Тарас Иванович, пĕр сакăрвуналла çитнĕ старик, Кулине мăнакка тата арман хуралçи Эрхип мучи.

Виççĕшне те кăштах ыйăх пуснă пулмалла. Эрхип мучи, яланхи пекех, кăмака çине хăпарса ларнă та эхлеткелесе вырăн майлаштарать. Вăл сахалтан та çитмĕл çулта. Кулине мăнакка тĕпелти кутник çине хутланса выртнă.

Урай варринче тимĕр кăмака çунать. Çынсем ăшăпа пусăрăнса, тулта çил шăхăрнине итлеççĕ. Малти кĕтесре, хăрăмпа çăмламасланса кайнă çӳлĕк çинче, репродуктор ларать. Радиопа ташă кĕввисем параççĕ.

Вăхăт—çурçĕр тĕлĕ.

—Ĕç мар . . . —тет урайĕнче выртакан Тарас Иванович кĕвĕ май пӳрнипе вут пуленине шаккакаласа. Унтан кăмака çинче выртакан Эрхип мучи мĕн каласса кĕтсе, кĕсъинчен чĕлĕм кăларать.

Эрхип чĕнмест.

—Ĕç мар . . .—тет каллех Тарас Иванович, Эрхип мучин шур сухалĕ çине кăмăлсăррăн пăхса.—Кăнтăрла иртсенех килтĕм, халь те авăртса каяймастăп. Мĕн калĕ ĕнтĕ мана карчăк, киле пырсан? . . Лар ĕнтĕ çĕрĕпе çак упа шăтăкĕнче . . . Йĕрке çук çав пирĕн. Утарта ун пек хăтланас пулсан, сана хуртсем... тем туса хурĕç. Хурт вăл... непуç... пурне те ăнлавать.

Эрхип мучи кăштăртаткаласа кăмака çинчен анать те, Кулине мăнакка çине пăхса илсе, мăкăртатма тытăнать:

— Çиле ăна каласа итлеттермелле мар-çке...

Чăн та çил, хăйĕн çулне улăштарса, кашни сехетрех тĕрлĕ енчен вĕрет, арман хӳрине нихăш еннелле пăрса лартма

га пĕлмелле мар. Çавăнпа Тарас Иванович Эрхип мучи сăмахĕнче тĕрĕслĕх пуррине туйса ырă та, усал та шарламасть.

Кулине мăнакка та кăмăлсăр, унăн шухăшĕсем те килте пулас.

Тĕттĕм уй варринчи пӳртĕн пĕчĕк чӳречисене çил чăрмалать. Репродуктор ăшĕнчен çуллахи тӳлек садри шăпăк юрри тата шыв шăмпăртатнисем илтĕнеççĕ. Такам çемçĕн шăхăркаласа çырма хĕррипе утса пырать...

Радио сасартăк мăкăртаткаласа, найлатса илчĕ те калаçма пуçларĕ.

„...СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ... Киевăн кăнтăр енче Днепр шывĕ урлă каçнă чух паттăррăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Иван Тимофеевич Сироткин лейтенанта... Совет Союз Геройĕн ятне парас...“

Пӳртри çынсем сасартăк тĕлĕннипе пĕр вăхăта нимĕн те чĕнмерĕç. Тарас Иванович чĕлĕмĕ шăкăрт туса урайне ӳкрĕ. Кулине мăнакка васкаса кутник çине тăрса ларчĕ.

—Тур çырлахах!—терĕ те вăл сывлăшĕ питĕрĕнсе ларнипе шăппăн йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ.—Ара, ку Тăлăх Иван вĕт? Эрхип кум, Тарас мучи, итлĕр-ха, кăна Иван çинчен каларĕç вĕт?..

Тарас Иванович урайĕнчен чĕлĕмне илчĕ те тăрса сĕтел хушшине пырса ларчĕ. Вăл хăйне лăпкăн та тивĕçлĕн тыткаланине пăхсан, ăна кĕтмен хыпар пĕртте тĕлĕнтермерĕ, темелле. Анчах унăн та, Кулине мăнакканни пек, аллисем чĕтреççĕ, çăварĕнчи чĕлĕмĕ тăтăшах тĕтĕм кăларать.

Тарас Ивановича кура Кулине мăнакка та кăштах лăпланчĕ.

—Чăнах-ши ку? Çав Тăлăх Иванах герой пулнă-ши?

—Çавă пулмасăр—терĕ те Тарас Иванович, шалти кĕсйинчен темĕнле хут таткисем туртса кăларчĕ.—Пĕлес пулать... Хамăр ял ачи вĕт вăл.

—Молодец!—терĕ халиччен сăмах чĕнмесĕр тăнă Эрхип мучи те.—Хамăр ял ятне ямарĕ иккен.

—Пĕчĕккĕ чухнех питĕ пултаратчĕ те.

—Çыру ярас мар-и ун патне?—ыйтрĕ Тарас Иванович.

—Çыраканĕ çук-çке?..

—Чухлаканччĕ эпĕ кăштах.

Стариксем пĕчĕк сĕтел тавра пуçтарăнса ларчĕç.

Пĕр сехете яхăн çырчĕ Тарас Иванович, унтан кăшт канчĕ, вара çамки çинчи тарне шăлса илсе, карандаш татки вĕçне чĕлхипе йĕпетсе, малалла çырма тытăнчĕ.

„... Петĕр тухтăра тухрĕ. Хĕлип ывăлĕсем виççĕшĕ те салтакра. Раман арăмĕн ĕни икĕ пăру туса пачĕ. Тата хамăр колхоз вăйĕпе икĕ яташлă шкул туса лартрăмăр. Тимахви...“

— Кăштах ман çинчен те çырасчĕ,--терĕ Кулине мăнакка,--атту хут пĕтсе кайĕ тата...

Тарас Иванович паçăрах сӳнсе ларнă чĕлĕмне пĕр-икĕ хут паклаттарса илчĕ те, каллех сĕтел çине пĕшкĕнчĕ.

„... Малалла Кулине мăнакку çинчен пĕлтеретĕп. Унăн кăçал пысăк хуйхă пулчĕ. Ĕне ферминче заведущи пулса ĕçлекен хĕрĕ, леш хитре Ануш текенни, кӳршĕ ялти летчикпа паллашса, унăн ярапланĕпех фронта вĕçсе кайрĕ. Халĕ сестрана кĕнĕ, тет. „Ялта каччăсем çук-и мĕн пирĕн?“ —тесе ятлаçать амăшĕ. А чăн мар-и мĕн? Акă Кĕркурисен Хĕлипне илес. Иртнĕ çул вăл хăй пĕччен вăтăр ултă нимĕçе вĕлернĕ, икĕ медаль илнĕ. Патретне хаçат çинче çапса кăларчĕç. Мĕнтен япăх каччă? Е тата Эрхип старикĕн Васлейне илес. Вăл хăй ухсах пулсан та, пĕлтĕр çичçĕр ĕçкунĕ турĕ. Мускава кайса Калининпа курса калаçнă... Кашни лайăх ĕçлекен хĕр хамăр колхозран урăх çĕрелле каччă кайса пĕтсен—мĕн интересĕ? Çавăнпа Ануш кайнишĕн пуртĕ кăмăлсăр пултăмăр. Çитменнине летчикĕсем хамăр ялтах пурччĕ. Таниле ачисем иккĕшĕ те кĕркуннеренпех ярапланпа вĕçеççĕ. Тата Микулай та, Якур та, Михал та фронтра летчика кĕнĕ тет...“

Тимĕр кăмака паçăрах сӳнсе ларнă ĕнтĕ. Пӳртре сивĕ. Анчах старикcем ăна-кăна нимĕн те асăрхамаççĕ. Эрхип мучи пĕр хускалмасăр çыруçă алли çине тинкерсе пăхса ларать. Кулине мăнакка каллех кутник çине выртнă. Анчах вăл та çывăрмасть.

Тарас Иванович çаплах çыру çырать.

„Малалла колхоз председателĕ ват çынсене хисеплемен-ни çинчен çырса пĕлтерем. Февраль уйăхĕнче пуху турăмăр. Çăмах Хĕрлĕ Çара валли парнесем пуçтарасси çинчен хускалчĕ.

Элĕ, яланхи пекех, кăмака çине хăпарса выртнăччĕ. Мĕнех вара ват çын кăмака çине хăпарнинче?... Кантрат Ефимчă йĕркипе: „Эс мĕн пама шутлан? Эс мĕн паран?“ тесе ыйтса пырать. Кĕçех черет ман пата çитет, тесе выртатăп элĕ. Курмалла пултăр тесе юри кăмака хĕрринерех пырса выртрăм. Манран сылтăм енче, урайĕнче, Укахви кин, сулахайра—Хĕветĕр шăллăм. Анчах Кантрат Ефимчă Укахви кинтен ыйтрĕ те,—тӳрех Хĕветĕр çине куçрĕ. Ун-

тан Марьерен ыйтрӗ. Хветутран, Хӗлип Петровичран... Эпӗ, сасартӑк анраса ӳкнипе, пӗр сӑмах та чӗнме ӗлкӗреймерӗм. А эпӗ ӑҫта, шӑллӑм? Эпӗ ӑҫта кайҫа кӗтӗм? Тур мӑшкӑлӗ вӗт ку! Е, ват ҫын тесе, мана кӳрентерме те юрать-и? Е манӑн ӗҫкунӗ сахал-и, ӗҫме-ҫиме ҫук-и? Е вӑл мана, кӑмака ҫинче выртать тесе, ҫын шутӗнчен кӑларасшӑн-и?—Тавтапуҫ, эпӗ сакӑрвуннӑра пулсан та, нихӑш енчен те катӑк мар ҫынсенчен...

Эпӗ ҫав кунах района пуштӑ ҫуртне вунӑ кӗрепенке пыл тата сысна какайӗ кайса патӑм. Кӑҫат та хутӑм..."

Ҫутӑлас енне Тарас Ивановичӑн хут татӑкӗсем те, Эрхип мучи панӑ квитанци кӗнеки те кукӑр-макӑр ҫырнӑ сӑмахсемпе тулса ларчӗҫ. Анчах ялти хыпарсене ҫапах-ха ҫуррине те ҫырман. Стариксем виҫ енчен сӗтел ҫине чавсаланса ларса шухӑша кайрӗҫ.

—Тухмасть вӗт капла пирӗн,—терӗ Тарас Иванович, куҫне сӑтӑркаласа.—Арпашӑнса кайрӑм эпӗ... Ҫырӑвӗ те ӑнланмалла мар пулса тухать, вӑрӑм та пулать.

— Тен хыпарсене уйрӑмӑн-уйрӑмӑн ҫырса пӗлтерӗпӗр?

— Ара, хучӗ сахал-ҫке?

— Элир кӗскереххӗн ҫырӑпӑр.

— Мӗнле майпа?—тӗлӗнчӗ Тарас Иванович.—Вӑрӑм ҫырса та пӗтмерӗ пулать те...

— Чыхварсемпе ҫырас...

* * *

Ҫил-тӑман чарӑннӑ. Хӗвелтухӗҫ енчен тӳпе тӑрӑх шурӑмпуҫ хӑпарать. Арман ҫунаттисем халь майӗпен те тикӗссӗн хӑлаҫланаҫҫӗ. Хулӑм тутӑрпа пӗркеннӗ Кулине мӑнакка васкасах пасманана тырӑ йӑтать.

Эрхип мучи яла кайнӑ.

Пӳртре Тарас Иванович пӗччен. Вӑл лутра сӗтел хушшине хутланса ларнӑ та ҫаплах ҫыру ҫырать:

„Арланов Архип (Эрхип мучи). 1942 ҫул—619 ӗҫкунӗ, 1943 ҫул—700 ӗҫкунӗ тунӑ. Икӗ ачи сирӗн патра, фронтра, тепри колхозра.

Иванов Тарас. Эпӗ. 1942 ҫ.—625, 1943 ҫ.—800 ӗҫкунӗ. Карчӑк ферма заведущи...

Кулине... 618 ӗҫкунӗ..."

Ирхи апат тӗлнелле тин Тарас Иванович пысӑк хут тӗркӗмӗ ҫине „Действующи Ҫар, И. Т. Сироткин Героя..." тесе ҫырса хучӗ те районалла тухса утрӗ.

## ЭКЗИТУС ЛЕТАЛИС

Урлă май виçĕ утăм, тăрăх май—пиллĕк... Вĕренлесе лартнă пек, ниçта та кайма çук. Камера тăвăр, пăчă. Вĕренлесе лартнă пекех, шухăшĕсемпе те пĕр ўкĕнĕçлĕ ĕçрен ниçта та каяймасть Муртак.

Ыран ирхине е кĕçĕрех унăн пурнăçĕ вĕçленет, экзитус леталис, медицина чĕлхипе каласан—„вилĕмпе вĕçленет".

Пурнăç!—тет Муртак, пĕр чарăнмасăр камера тăрăх каллĕ-маллĕ кумса.—Ытла та мăшкăлла вĕçленет-çке вăл хăшпĕр чухне пурнăç тени".

Хальхи пекех астăвать Муртак. Вăл ун чухне медицина факультечĕн виççĕмĕш курсĕнче вĕренетчĕ. Пĕр каçхине вăл уçăлма тухрĕ. Площаде çитес умĕн ăна хĕрпе каччă хуса çитрĕç. Хĕрĕ уйрăлса карĕ. Вăл курăнми пуличченех куçне илмесĕр пăхса тăнă каччă сасартăк тăна кĕнĕ пек пулчĕ те, çынсем хăй çине пăхнине асăрхаса, чупса карĕ. Трамвай линийĕ çинче темрен такăнчĕ пулас та, çĕре персе анчĕ. Шăп çав самантра иртсе каякан трамвай ăна хăй айне туса пилĕк-ултă утăм сĕтĕрсе кайрĕ... Пăртакран çамрăк çыннăн ўчĕн татăкĕсене каретăпа больницăна асатрĕç. Урам шăлса çўрекен карчăк юнлă вырăна хăйăр пырса сапрĕ.

Çапла кăна.

„Экзитус леталис! Вилĕмпе вĕçленчĕ!"—шухăшланăччĕ ун чух пулас тухтăр Муртак.

Хайĕн пурнăçĕ те çапла ухмахла вĕçленмест-ши унăн? Шухăшĕсемпе каллех университета таврăнать Муртак. Пăллакан çын пулăшнипе ăнсăртран вĕренме кĕнĕскер, чухăн хресчен ывăлĕ Муртак кунĕн-çĕрĕн кĕнекесем вулама тытăннă. Яланах унăн кивĕ пиншакĕн кĕсъисем, икĕ хул айĕ, хĕвĕ тĕрлĕ словарьсемпе тата кĕнекесемпе тулса çўренĕ..

Университет пĕтерсен вăл ĕçлеме Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи пĕр яла, тайга хушшине кайнă. Лăпкăскер, сахалтарах калаçма, анчах ытларах шухăшласа çўреме юратаканскер, вăл кунта та кĕнекесем çине тирĕннĕ; шавлăрах, çапăнчăкрах çынсенчен ютшăнарах çўренĕ. Больницăра ĕçлемен кунсенче тайгана сунара тухнă.

Вăрçă тапрансан, пушшех те çынсенчен писнĕ Муртак. Урама сайра тухкаланă. Хăйпе пĕрле ĕçлекен фельдшер Климов патне те пули-пулми ĕçшĕн нихăçан та кайман. Кĕрхи вăрăм кунсенче вăл „Критика чистого разума" ытлă кĕнекене е медицина ашшĕ Гиппократ çинчен çырнă монографие вуласа ирттернĕ.

Граждан вăрçи тапрансан, ял аларан-алла куçма тытăннă: паян—партизансенче, ыран—Семенов бандинче, тепĕр кун—японецсенче... Яла шуррисем илсен, Муртак çĕрле хăй пурнакан çуртăн хыçĕнчи тарăн çырансем тăрăх тайганалла кайнă. Партизансем килсен, каялла яла таврăнса больницăра ĕçленĕ.

— Çапăçĕç те, чарăнĕç те—унта манăн ĕçĕм-хĕлĕм çук, —тенĕ вăл хăйне хăй.

„Интеллигент!—тет халь Муртак, тарланă çамкине сивĕ те йĕпе стена çумне тĕкĕнтерсе.—Мунчала..."

Пăшăлка чунлă çын, вăл ĕмĕр тăршшĕпех аякран пăхса тăракан свидетель пулса, хăйĕн кĕнекисемпе йăпанма ĕмĕтленнĕ. Тен, çапла татах чылай пурăннă пулĕччĕ-и, анчах чĕр пурнăç хумĕ кĕтмен çĕртен пырса çапса, Муртакăн лăпкă „тĕнчине" ӳпне-питне çавăрса çапнă. Çапах халлĕхе хăй чĕрĕ юлнă-ха вăл...

Эрне каярах фельдшер Климов таçта çухалнă. Унтан сестрасем кайса пĕтнĕ. Вара больницăна пысăк çăрапа питĕрсе илнĕ те Муртак, килне таврăнса, Гиппократ биографине вулама ларнă.

Илтнĕ каярахпа Муртак: Климов таврари ялсенче хресченсемпе сунарçăсенчен отряд чăмăртама пуçланă иккен...

Пĕр тĕттĕм кĕрхи каç Муртак хапха умĕнче тăнă. Пус тараси çурăкĕсенче шăхăракан çил сассине итлесе, хăйĕн вĕççĕр шухăшне шухăшланă вăл. Пурăнса ыйăннă çынсенни пекех, асаплă та вĕçленмен шухăшсем çаврăннă унăн пуçĕнче: кĕрхи çанталăк пек тĕксĕм кун-çул, йăлăхтарнă пĕчченлĕх...

Ял енчен сасартăк ура сассисем илтĕннĕ. Такам пӳлĕннĕ лаша пек хыттăн хашкаса уй хапхинелле чупнă, такамсем ăна хыçалтан хăваланă. Муртак сасартăк шикленсе ӳксе, кĕçĕн алăк хăлăпĕнчен çавăрса илнĕ, анчах уçман вăл алăкне, ура сассисем çывхарнине итлесе, майĕпен аллине алăк хăлăпĕнчен вĕçернĕ.

Унтан çуртсем çуммипе вăрă пек йăпшăнса, сасăсем еннелле шунă.

Малтанах пĕтĕм пĕвĕпе туртăшса, урисене аран-аран сĕтĕрсе чупакан мĕлке курăннă. Вăл хăрăлтатса сывласа питĕрнĕ хапхасем çумне пыра-пыра çапăннă, хыçалтисем çите пуçласан татах малалла, уй хапхинелле туртăннă.

Хăвалакансем хăй тĕлне çитерехпе Муртак каярах юлса пыраканни ялти лавка хуçи иккенне палласа илнĕ. Ăш-чик тăруках нумайранпа кĕвĕлсе пурăннă курайманлăхпа

тулса ларнӑ. Мӗн яла килнӗренпех Муртак вӑл лутра ҫамкаллӑ ҫӳллӗ те хыткан ҫын ҫине ҫиллине шӑмарса ҫӳренӗ. Вӑл ҫынсене макӑртнисем, нихҫан шар курмасӑр пурӑнни, унӑн куллен ӳссе пыракан пурлӑх, ҫынсемпе калаҫнӑ чух йӗрӗнчӗклӗн кулкалани—пурте ӗмӗр сӗвӗрӗлми тарӑхупа тулнӑ Муртак чӗрине. Пайтах ҫынна такӑнтарнӑ, хӑй кусӗнчен пӑхтарнӑ вӑл хуҫа. Халь кам пуҫне ҫиесшӗн-ши тата вӑл этем? Паллах, вӑрӑ-хурах мар вӑл тараканни. Мӗнле пулсан та, вӑрӑ-хурах хыҫҫӑнах хӑй сӗтӗрӗнсе ҫӳремӗччӗ вӑл хуҫа..

Пӗр секунд хушши иккӗленсе тӑнӑ Муртак.

„Кам-ши вӑл тараканни? Пӗтет ӗнтӗ хӑй уй-хапхине тухсанах...“—ҫавӑрӑннӑ унӑн пуҫӗнче.

Муртак сасартӑк каялла ҫаврӑнса чупнӑ, уялла таракан ҫын умне ӳксе, кӗҫӗн алӑкне уҫса пӑрахнӑ. Унтан тайкаланса ҫеҫ утма пуҫланӑ ҫынна аллинчен тытса хӑй патне туртса кӳртнӗ.

Тепӗр ҫур сехетрен Муртак тӑнсӑр пулнӑ Климова ҫӗклесе (тарса пыракан ҫын ҫавӑ пулнӑ) анкартисем хыҫӗнчи шырлансем урлӑ тайганалла утнӑ. Хыҫалта, больница вырӑнӗнче, кӗрхи шурӑмпуҫ пек, сӳнекен пушар йӑмӑх хӗрлӗн тӗлкӗшсе выртнӑ.

„Айван пулнӑ ҫав эпӗ,—тет халь Муртак, камера тӑрӑх ӗшенчӗклӗн утса.—Кӗҫех ак—вилӗм... Экзитус леталис... Мӗнле паллӑрах ӗҫ туса хӑвартӑм-ши эпӗ хамӑн пурнӑҫра? Таса-ши манӑн совесть? Тӑван ҫӗршыв тӑшманӗсемпе юлашки юн тумламӗ юлмиччен ҫапӑҫас вырӑнне—тӗлӗрсе ирттертӗм. Больницӑсене ҫунтараҫҫӗ, ялсемпе хуласене аркатаҫҫӗ, ҫынсене вӗлереҫҫӗ... а эпӗ мӗн ӗҫлерӗм?

Камера алӑкӗ умӗнче хуралҫӑ ури сассисем илтӗнеҫҫӗ. Таҫта алӑк уҫӑлса хупӑнчӗ.

„Кая юлса хутшӑнтӑм ӗҫе,—тет Муртак.—Унта та пулин ӑнсӑртран тенӗ пек ҫеҫ... Пӗрре кӑна разведка кайма тухрӑм—тытса та хупрӗҫ. Ман ҫине шанса, ман йӗрпе килсен, пӗтӗм отряд пӗтме пултарать... Ялта никам та ҫук пулсан, эпир пыриччен унтах пурӑн, терӗҫ. Кам пӗлнӗ-ха кунта японецсем килсе тухасса?“

Картишӗнче йытӑ вӗрсе ячӗ. Унтан алӑк айӗнчен йӗпе урайне ҫутӑ ӳкрӗ. Камера леш вӗҫне ҫитсе каялла ҫаврӑнчӗ те Муртак алӑк патӗнче Япони салтакӗсем тӑнине асӑрхарӗ. Кушак пек сисӗнкӗсӗр ҫӳреҫҫӗ иккен самурайсем.

Муртак хӑйсен еннелле ҫаврӑнсанах пӗр салтакӗ, саламлӑнӑ пек авӑнса, алӑк ҫине кӑтартрӗ.

—Господин капитана ходи нада,—терĕ вăл утма тытăнса. Тепĕр японецĕ Муртак хыçне юлчĕ.

„Допроса илсе каяççĕ,—шутларĕ Муртак.—Нивушлĕ нимпе те пĕлтерейместĕп отряда?...

Пÿлĕм алăкĕ уçăлсанах ăна хирĕç сĕтел хушшинчен лутра японец çĕкленчĕ. Салтаксем кутăн чакса тухса карĕç.

—Прасю!—пÿрнипе сĕтеле хирĕç пукан çине тĕллесе кăтартрĕ японец.—Ларма пултаратăр!"

„Ларма пултаратăр!" Вăл, таçтан хăяматран килсе тухнă çын—хуçа иккен, а эпĕ—чура! Хамăр çĕршывра—чура! Тÿсме çук мăшкăл! Ку ирсĕрсене пĕри юлмиччен çунтарса, кĕлне çилпе вĕçтерсе ямалла. Пĕтĕм ватти-вĕтти таран çĕкленмелле пулнă. Йăхĕ юлмиччен тасатмалла вĕсене... Ма каярах юлса ăнланса илет-ши вăл çын тени мĕн кирлине?"

Муртак японец çине пăхса илчĕ. Хăлхисене алăпа каялла вырттарнă йытă евĕр çивĕччĕн пăхакан вĕшле пит-куçлă японец клеще урисене саркаласа пуснă та, урай варринче чĕлĕм тивертсе тăрать. Муртак сасартăк йывăр курайманлăхпа кĕвĕлсе стена çумне таянчĕ.

—Прасю!—терĕ вăл темĕнле ют сасăпа, пÿрнипе пукан çине тĕллесе.—Ларма пултаратăр!

Японец тутисене кулнă пек сарса хăй вырăнне кайса ларчĕ, сĕтел çине наганне кăларса хучĕ.

—Харасĕ,—терĕ вăл, чалăш куçĕсене Муртак çине тĕллесе.—Эсир шÿт тума юрататăр иккен... Эпĕ сирĕн тумтирĕрсене пăхса тухрăм*). Пур енчен те курăнать—эсир партизансем хушшинче темĕнле пысăк начальник пулмалла. Эсир вĕреннĕ çын. Тÿррипех калам—эпе сирĕнпе пĕр чĕлхе тупасшăн. Пире партизансем çÿрекен районсен картти кирлĕ. Ăна тума пулăшсан, сирĕн пурте пулать: пурнăç, укçа...

Муртак майĕпен утса пырса, сĕтел çумĕнчи пукан çине ларчĕ. Унтан сасартăк сĕтелне японец çине йăвантарчĕ...

* * *

Вăл темĕнле тĕттĕм пÿлĕмре тăна кĕчĕ. Тăнлав тĕлĕнчен пит тăрăх юн сăрхăнать. Сулахай аллин пÿрнисем какайланса пĕр çĕре çыпăçса ларнă.

---

*) Японецсем кашни тыткăна лекнĕ çынăннех тумтирсене хывса тĕрĕслеnĕ. Ун çинче Япони салтакĕсен кĕпи-йĕмĕсем пулсан, ăна вăтам ĕмĕр курман тискерлĕхпе асаплантарса вĕлернĕ. Автор.

„Ată kĕлипе таптанă пулас",—шутласа илчĕ Муртак. Пĕтĕмпе суранланса пĕтнĕ пулин те, пимĕн ыратни те сисĕнмест. Пĕтĕм ӳт-пӳ çуннă пек вĕриленсе тăрать. Тӳсме çук ĕçес килет. Муртак упаленсе пĕр еннелле карĕ. Стена. Йывăç пӳртре иккен. Анчах ма тĕттĕм? Чӳречесем пулма кирлĕ-çке? Пӳлĕмĕн тепĕр пуçĕнче Муртак аллине темĕнле çемçескер лекрĕ. Çын вилли! Пичĕ вырăнĕнче кăмрăкланса ларнă ӳт татăкĕсем лекрĕç. Каялла упаленме тытăннă Муртак сасартăк аллине пĕçернине туйса ура çине сиксе тăчĕ. Урайĕнче кăвар йăлкăшрĕ. Асаплантарса вĕлермелли пӳлĕм иккен ку!..

Тăнсăр пулса йăванса кайнă Муртак, сивĕ тытнă пек чĕтресе, кăвар патне пĕшкĕнчĕ. Вара ал айне мĕн лекнине кăвар çине купалама пуçларĕ.

Акă отряда пĕлтермелли сигнал!..

Пилĕк-ултă минутран пӳлĕм ăшчиккине вут хыпса илчĕ. Муртак тĕтĕмпе чыхăнса, урайне йăванса кайрĕ. Пуçра шухăшсен юлашки татăкĕсем тĕтреллĕн шăвăнса иртрĕç.

„Революци ĕçĕ мухтавлă... Пуçа уншăн хуратăп. Вилĕм... Анчах хисеплĕ, ӳпкевсĕр..."

1940 ç.

Цена 2 р.

ФЕДОР УЯР

НА РЕКЕ СОК

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ ◆ 1947